24-мĕш çӳл тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
2
ВЫРСАРНИКУН
27 (5742) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ВКП(б) ПĔТĔМ СОЮЗРИ XVIII КОНФЕРЕНЦИЙĔ УМĔН

Февралĕн 15-мĕшĕнче ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлать. ВКП(б) Центральный Комитечĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пухасси çинчен пĕлтерни рабочисен, колхозниксен, мĕнпур ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне çĕклерĕ. Ку вăл ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче тăракан ыйтусем — промышленность тата транспорт ыйтăвĕсем пирĕн халăх хуçалăхĕнче калама çук пысăк вырăн йышăннинчен те килет. Çавăнпа ĕнтĕ халĕ предприятисенче, колхозсенче социализмлă ăмăртăван, стахановла движенин çĕнĕ хумĕ хăватлăн çĕкленет. Рабочисем, колхозниксем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференци ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илсе, вĕсене ăнăçлăн пурнăçласçĕ. Парторганизацисем ертсе пынипе, предприятисемпе колхозсем ĕç тухăçлăхне хăпартас, продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе кашни кун çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Улатăр паровозсем юсакан завод коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăна лайăх пурнăçлать. Январь уйăхĕнче завод планран ирттерсе 4 паровоз юсаса кăларнă. Заводри парторганизаци ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленнĕ май цехсенче, бригадăсенче, каçхи сменăсенче ĕçлекенсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе куллен туса пырать. Коммунистсем производствăра примерлă ĕçлеççĕ, рабочисем хушшинче XVIII конференцин ыйтăвĕсем пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каласа ăнлантарса параççĕ.

Çĕмĕрлери «Большевик» заводри скумпи цехне коммунист Щукин ертсе пырать. Цех ăмăртăва хутшăнса конкретлă обязательство илнĕ. Цех коллективĕ январь уйăхĕнчи производство программине çирĕм кун хушшинче ытлашшипех тултарчĕ. Древкомбинатри 5-мĕш номерлĕ цех та ВКП(б) Пĕтĕм Союзри конференци ячĕпе ăмăртăва хутшăнса çăй çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлать. Январь уйăхĕнчи производство программине срокчен ытлашшипех тултарнă, конференци уçăлнă тĕле февраль уйăхĕнчи плана тултарассишĕн кĕрешет.

Мускав—Хусан чугунçулĕн Канаш станцинчи пуçламĕш парторганизаци ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленнĕ май, пысăк ĕçсем туса ирттерет. Партконференци пуçарнипе станцăра ĕçлекен стахановецсен пухуне ирттернĕ, унта стахановла ĕçĕн опытне мĕнпур рабочисем хушшинче сарасси çинчен сӳтсе-явнă. Кун хыççăн стахановецсем рабочисене хăйсен ĕç опычĕ çинчен тĕплĕн каласа панă. Çапла, Назаров юлташ партин XVIII конференци ячĕпе йывăр составлă поезд илсе кайнă хыççăн, çакăн çинчен пĕтĕм коллективра сӳтсе-явнă. Машинистсем, помощниксем, кочегарсем çул çинче брак пулассине пĕтĕмпех пĕтересшĕн, топливăна 10 процент перекетлессишĕн, технически хăвăртлăха ӳстересшĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

Улатăр станцийĕ, Сергач станцине ăмăртса ĕçлесе, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри конференци уçăлнă тĕле икĕ уйăхри плана тултарассишĕн кĕрешет.

Колхозсем çитес çуракине отлично хатĕрленессишĕн ăмăртаççĕ. Ленин—Сталин партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине производствăллă çĕнĕ парне параçсишĕн пиншер колхозниксемпе колхозницăсем социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри пуçламĕш парторганизаци конференци умĕнхи ăмăртăва лайăх ертсе пыратъ. Пуçламĕш парторганизаци ăмăрту колхозра мĕнле сарăлса пыни çинчен ятарласа ыйту лартса сӳтсе-явнă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Сталь» колхозри парторганизаци ВКП(б) Пĕтĕм Союзри конференцине хатĕрленес ыйтупа колхоз членĕсен пухуне туса ирттернĕ, колхозниксем конференци уçăлнă куна çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илме обязательство илнĕ. Çак обязательствăна колхозниксем çине тăрса пурнăçлаççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ, вăрлăхсене сортланă, стахановла шкулра 40 çын ытла вĕренеççĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленесси уйăм округсем тăрăх СССР Верховный Советне тата вырăнти Советсене депутатсем суйлас кампанипе пĕр вăхăтра пулса пырать. Çавăнпа та пирĕн республикăри ĕçсыннисем çак паллă кунсене — февралĕн 15-мĕшне тата 16-мĕшне питĕ пысăк хаваслăхпа хатĕрленеççĕ. Кашни предприяти, кашни колхоз большевиксен партин вунсакăрмĕш конференцине тата суйлавсен кунне производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференци уçăласси нумай юлмарĕ. Предприятисенчи, колхозсенчи парторганизацисен задачи — ĕçсыннисен производствăллă тата политикăллă активлăхне организацилесе ертсе пырасси пулать. Анчах та хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем çак задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе сахал тăрăшаççĕ. Сăмахран, Чăвашсоюзăн Канашри базинчи пуçламĕш парторганизаци ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлет. Парторганизаци ку ыйтăва базăра ĕçлекенсен пухăвĕнче те ăнлантарса паман. Çавăн пекех Етĕрнери çу заводĕнчи пуçламĕш парторганизаци те конференцине хатĕрленес тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлет. Пуçламĕш парторганизаци рабочисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пырать. Агитколлектива ячĕшĕн кăна тунă. Агитаторсем рабочисем хушшинче нимĕн те ĕçлемеççĕ, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче тăракан ыйтусем çинчен ăнлантарса паман. Кун пек фактсем ытти районсенче те тĕл пулаççĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри конференцинче сӳтсе-явмалли ыйтусем пирĕн çĕршывăн питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çав ыйтусене ăнăçлăн пурнăçлани пирĕн çĕршыври социализмла строительствăра çĕнĕ çĕнтерӳсем тума май парать. Партконференцине çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илесси — кашни парторганизацин, кашни коммунистăн пархатарлă задачи пулса тăрать.

Киргизири Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитетне

Киргиз ССР Верховный Совечĕн Президиумне

Киргиз ССР Халăх Комиссарĕсен Советне

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕпе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Киргизири рабочисене, колхозниксене тата интеллигенцине Киргиз Советлă Социализмлă Республикине туса хунăранпа вунпиллĕк çул тултарнă ятпа саламлаççĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци киргиз халăхне капитализмлă тата нациллĕ пусмăртан, феодалла князьсен — хансен, байсен, манапсен пусмăрĕнчен яланлăхах хăтарчĕ. Киргизири ĕçсыннисем большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Киргизие, ĕлĕк патшан кая юлнă колонийĕ пулнăскерне, чечекленсе ӳссе пыракан советлă социализмлă республика туса хучĕç.

Совет влаçĕ пулнăранпа Киргизире социализмлă промышленность хăвăрт аталанса пычĕ. Кзыл-Кий, Сулюкта, Кок-Янгак, Таш-Кумыр ятлă кăмрăк вырăнĕсенче ĕнĕ шахтăсене çĕнĕрен реконструкциленĕ тата çĕнĕ шахтăсене ĕçе кĕртнĕ. Çĕркăмрăкĕ кăларасси, 1913 çулта 103 пин тонна пулнă çĕртен, 1940 çулта 1.383 пин тоннăна çитнĕ. Цветной металсен промышленноçне çĕнĕрен тунă. Ошра пурçăн фабрики, Фрунзери аш-какай комбиначĕ, сукна фабрики, çĕрмамăкĕ тасатакан, тир-сăран тăвакан тата сахăр завочĕсем лартнă. Совет влаçĕ пулнăранпа Киргизире чугунçулсем тата лайăх шоссе çулĕсем тунă.

Ĕлĕк Киргизири вырăнтан вырăна куçса çӳрекенсен ялхуçалăхĕ кая юлнăскер пулнă, халĕ ĕнтĕ ăна шултра, чи çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланнă социализмлă хуçалăх туса хунă. Киргизи культурăллă тата аталаннă ялхуçалăхлĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен республика пулса тăчĕ. Республикăра выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ чылаях ӳснĕ. 1940 çулта, 1935 çултипе танлаштарсан, майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ — 175 процент, лашасен хисепĕ — 146 процент, качакасемпе сурăхсен хисепĕ — 262 процент пулнă. Киргизири колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче 5 пин ытла трактор тата 1 пине яхăн комбайн ĕçлеççĕ. Нумай пулмасть иртнĕ вăхăтра чĕрĕ пурнăçсăр пулнă пухширсенче уй шăвармалли каналсем тунă, ку вырăнсем ĕнтĕ çĕрмамăкĕ, тулă, сахăр кăшманĕ, табак тата кенаф акнă чечекленекен уйхирсем пулса пыраççĕ. 1939—1940 çулсенче колхозсем пуçарнипе уйхирсене шăвармалли 25 канал тунă, вĕсен тăршшĕ пурĕ 289 километр. Шăваpса тăракан çĕрсен лаптăкĕ юлашки виçĕ çул хушшинче 300 пин гектар ытла ӳснĕ, кун пек çĕрсен хисепĕ 1940 çулта 752 пин гектара çитнĕ.

Киргиз халăхĕн культури хăвăрт ӳссе пырать. Республикăра киргиз халăх интеллигенцин нумай йышлă кадрĕсене пăхса ӳстернĕ. Совет влаçĕ пулнăранпа Киргизире халăх хутла пĕлесси 12 хут ӳснĕ. Киргизири шкулсенче 320 пин ытла ача вĕренет. Ку вăл революцичченхи вăхăтра вĕреннинчен 44 хут нумайрах пулать.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Советлă Киргизири ĕçсыннисем ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн тата ĕç тухăçлăхне ӳстересшĕн, промышленноçпа ялхуçалăхне малалла хăпартса пырассишĕн, киргиз халăхĕн социализмлă культурине малалла чечеклентерсе пырассишĕн малашне те большевикла çине тăрса кĕрешĕç, тесе шанса тăраççĕ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРЕСЕН СОВЕЧĔ. **ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.**

Киргиз ССР Верховный Совечĕн Президиумне

ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Киргизири рабочисене, колхозниксене, интеллигенцине, мĕнпур ĕçсыннисене Киргиз Советлă Социализмлă Республики вунпиллĕк çул тултарнă уяв ячĕпе саламласа ырă сунать.

Ĕçсыннисен тăшманĕсене хирĕç — байсене, манапсене, буржуаллă националистсене хирĕç пынă хаяр кĕрешӳре, Киргизири рабочисемпе хресченсем, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен ĕмĕрхи каяюлнăлăха çĕнтерсе пырса, социализм строительствинче пур енĕпе те пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Совет влаçĕ пулнăранпа Киргизия чечекленсе ӳссе пыракан, союзлă республикăсен тăванлă çемьинче хисеплĕ вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăракан социализмлă республика пулса тăчĕ. Киргиз СС Республикин территорийĕнче кăмрăк промышленноçĕ тунă, металл ĕçлекен заводсем, сӳслĕ çĕнĕ культурăсене тирпейлекен предприятисем лартнă. Çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕ анлăн сарăлнă.

Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче электрификацине çулĕĕр строительство енĕпе чылаях пысăк çитĕнӳсем тунă.

Киргиз ССР пĕрлешӳллĕ тата механизацинеле çĕрĕçлĕ, социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси аталанса пыракан çĕршыв пулса тăчĕ. Тĕштырăсемпе техникăллă культурăсене пысăк тухăçлă тата çирĕп тухăçлă тăвассине пурнăçа кĕртес çĕрте те ăнăçлă ĕçсем тунă.

Промышленноçпа ялхуçалăхĕнчи çитĕнӳсем ĕçсыннисен пурнăçне лайăх латса пырассине, формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культурăна аталантарса пырассине пурнăçа кĕртме май пачĕç. Социализмлă интеллигенцин нумай йышлă кадрĕсем ӳссе çитĕнчĕç, вĕсем республикăн хуçалăхне тата культурине малалла ӳстересшĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Киргиз СС Республикинчи ĕçсыннисем хуçалăхпа культура строительствинче пур енĕпе те татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассине, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле коммунистсен партийĕпе Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизмшăн кĕрешес ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем патне малалла кайса пырассине шансах тăрать.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти январĕн 31-мĕш.

Киргиз ССР-чи промышленноçра, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене, наукăпа искусство работникĕсене награджăлани

Киргиз Советлă Социализмлă Республики 15 çул тултарнă май, промышленноçа, ялхуçалăхне, наукăна тата искусствăна вăйлатас ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Киргиз СС Республикинчи промышленноçра, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене, наукăпа искусство работникĕсене 302 çынна ССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе награджăланă.

Ленин орденĕпе 15 çынна награджăланă. Вĕсем хушшинче: Джалал-Абад облаçĕнчи Сузак районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз звеньевойĕ С. Алимов; Ош облаçĕнчи Фрунзенский районри «Джанаил» колхозри çĕрмамăк пухакан К. Амраева; Ош облаçĕнчи Араван районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз звеньевойĕ А. Анаров; Киргиз ССР Совнаркомĕн председателĕ Кулатов юлташ; Джалал-Абад облаçĕнчи Сузак районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз звеньевойĕ С. Мамарасулов; Ош облаçĕнчи Карасуй районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Д. Мурзатов, Киргиз ССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ А. Толубаев; Ош облаçĕн ĕçсынни депутачĕсен Узген районĕнчи Совечĕн çĕрĕç пайĕнчи старший ветеринарнăй врач Ш. А. Тюлегенов тата ыттисем.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе 30 çынна награджăланă. Вĕсем хушшинче: Киргиз ССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ С. Д. Абушенко, Тянь-Шань облаçĕнчи Джумгаль районĕнчи «Таш-Тюбе» колхоз ĕне ферминчи вылăх пăхакан К. Бекмуратов; Киргизири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. В. Вагов юлташ; Киргизири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн иккĕмĕш секретарĕ А. Елебесов; Фрунзе облаçĕнчи Чуйск районĕнчи «Боорду» колхоз чабанĕ К. Кальчикеев т. ыттисем.

«Знак почета» орденĕпе 66 çынна награджăланă.

«За трудовую доблесть» медальпе 84 çынна, «За трудовое отличие» медальпе 103 çынна награджăланă. (ТАСС).

ПĔЛТЕРНИ

Ыран, февралĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет те 30 минутра Советсен Çурчĕн залĕнче партин хула организацинчи активĕн пухăвĕ пулать.

Кун йĕркинче:

1. ВКП(б) Обкомĕн V-мĕш пленумĕн итогĕсем.

Пухăва пропусксемпе кĕртеççĕ, пропусксене ВКП(б) горкомĕн оргинструкторски отделĕнче илмелле.

ВКП(б) горкомĕ.

УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

496-мĕш №-лĕ Шупашкар суйлав округĕн суйлав комиссийĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама

ИВАН МАТВЕЕВИЧ ЧАРЫКОВ

юлташ кандидатурине регистрацилеме

СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне суйламалли Чăваш АСС Республикинчи 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕн суйлав комиссийĕ йышăннă постановлени

Округ суйлав комиссине СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, тăратнă документсем «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 56, 57, 58, 59, 60 тата 61-мĕш статьисемпе тата СССР Верховный Совечĕн Президиумĕн 1940 çулти ноябрĕн 11-мĕшĕнче тата 1941 çулти январĕн 7-мĕшĕнче кăларнă Указсемпе пĕтĕмпех килĕшӳллĕ пулнине палăртса, суйлав комиссийĕ çапла йышăнать:

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 60-мĕш статьи тăрăх, 496-мĕш №-лĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем тăратнă Иван Матвеевич Чарыков кандидатурине баллотировкăна тăма регистрацилес; Иван Матвеевич Чарыков 1902 çулта çуралнă, ВКП(б) членĕ, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 66-мĕш статьи тăрăх Иван Матвеевич Чарыков юлташ кандидатурине Чăваш АСС Республикинчи 496-мĕш №-лĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

Округ суйлав комисси председателĕ М. ТЕРЕНТЬЕВ.
Округ суйлав комисси председателĕн заместителĕ А. ВАСИЛЬЕВА.
Округ суйлав комиссин секретарĕ А. ТИМОФЕЕВА.
Округ суйлав комиссин членĕсем: Ф. ПРОКОПЬЕВ, Г. НОВИКОВ, А. ВОЛКОВ, Б. ВАЗИКОВ, Д. МИХАЙЛОВА, К. ФЕДОРОВ, Д. ВАСИЛЬЕВ.

499-мĕш №-лĕ суйлав округен суйлав комиссийĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама

СТЕПАН ЕФИМОВИЧ БЕЛОЛИПЕЦКИЙ

юлташ кандидатурине регистрацилеме

СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне суйламалли Чăваш АСС Республикинчи 499-мĕш №-лĕ Вăрмар суйлав округĕн суйлав комиссийĕ йышăннă постановлени

Округ суйлав комиссине СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, тăратнă документсем «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 56, 57, 58, 59, 60 тата 61-мĕш статьисемпе тата СССР Верховный Совечĕн Президиумĕн 1940 çулти ноябрĕн 11-мĕшĕнче тата 1941 çулти январĕн 7-мĕшĕнче кăларнă Указсемпе пĕтĕмпех килĕшӳллĕ пулнине палăртса, суйлав комиссийĕ çапла йышăнать:

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 60-мĕш статьи тăрăх, 499-мĕш №-лĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама Куславккари строительство деталĕсен комбинатĕнчи рабочисен, служащисен, инженерно-технически работниксен, Вăрмар районĕнчи «Арабось» колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕсем (вăл пухусенче 446 çын пулнă) тăратнă Степан Ефимович Белолипецкий кандидатурине баллотировкăна тăма регистрацилес; Степан Ефимович Белолипецкий 1905 çулта çуралнă, ВКП(б) членĕ, Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 66-мĕш статьи тăрăх Степан Ефимович Белолипецкий юлташ кандидатурине Чăваш АСС Республикинчи 499-мĕш №-лĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

Округ суйлав комиссин председателĕ А. СМИРНОВ.
Округ суйлав комиссин секретарĕ И. ЖУКОВСКИЙ.
Округ суйлав комиссин членĕсем: В. КИРИЛЛОВ, А. ТАРАСОВ, М. ВАСИЛЬЕВ, А. КИРИЛЛОВА, И. ИЛЬИН, П. СМИРНОВ.

506-мĕш №-лĕ Етĕрне суйлав округĕн суйлав комиссийĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама

ЯКОВ КУЗЬМИЧ ПАВЛОВ

юлташ кандидатурине регистрацилеме

СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне суйламалли 506-мĕш №-лĕ Етĕрне суйлав округĕн суйлав комиссийĕ йышăннă постановлени

Округ суйлав комиссине СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, тăратнă документсем «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 56, 57, 58, 59, 60 тата 61-мĕш статьисемпе тата СССР Верховный Совечĕн Президиумĕн 1940 çулти ноябрĕн 11-мĕшĕнче тата 1941 çулти январĕн 7-мĕшĕнче кăларнă Указсемпе пĕтĕмпех килĕшӳллĕ пулнине палăртса, суйлав комиссийĕ çапла йышăнать:

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 60-мĕш статьи тăрăх, 506-мĕш №-лĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама Етĕрнери спиртзаводри тата çу заводĕнчи рабочисен, служащисен, инженерно-технически работниксен пухăвĕсем (вăл пухусенче 446 çын пулнă) тăратнă Яков Кузьмич Павлов кандидатурине баллотировкăна тăма регистрацилес, Яков Кузьмич Павлов 1902 çулта çуралнă, ВКП(б) членĕ, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 66-мĕш статьи тăрăх Яков Кузьмич Павлов юлташ кандидатурине Чăваш АСС Республикинчи 506-мĕш №-лĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

Округ суйлав комиссин председателĕ Г. СПИРИДОНОВ.
Округ суйлав комисси председателĕн заместителĕ В. ТРОФИМОВ.
Округ суйлав комиссин секретарĕ В. ЛЯГИНА.
Округ суйлав комиссин членĕсем: М. ДМИТРИЕВ, А. АНИКИН, Е. МОЛЬКОВ, К. ЯКИМОВА, И. НИКИТИН, А. НИКИТИНА.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Донецкри Индустриальнăй Институтăна Н. С. Хрущев ятне парасси çинчен

Донецкри Индустриальнăй Институтри профессорсемпе преподавательсен тата студентсен коллективĕ ыйтнине, çавăн пекех партин Сталино хулинчи организацийĕпе обществăллă организацисем ыйтнине пурнăçа кĕртес, Донецкри Индустриальнăй Институтăна Н. С. Хрущев ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти январĕн 31-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Донецкри Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан Индустриальнăй Институтăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе награджăласси çинчен

Донецкри Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан Индустриальнăй Институт 20 çул тултарнă юбилея уявланине паллă туса тата çĕркăмрăк промышленноçĕ валли пысăк квалификацияллĕ инженерсемпе техниксен кадрĕсене хатĕрлес ĕçре институт тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунине шута илсе — Донецкри Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан Индустриальнăй Институтăна **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе награджăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти январĕн 31-мĕш.

Донецкри Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан Индустриальнăй Институт работникĕсене награджăлани

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти январĕн 31-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх Донецкри Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан Индустриальнăй Институт 20 çул тултарнă юбилея уявланине паллă туса, пысăк квалификацияллĕ инженерсемпе техниксен кадрĕсене хатĕрлес ĕçре тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунăшăн тата институт Донбасри шахтăсемпе заводсене пысăк вулăшу панине шута илсе институтăн вунултă работникне СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе награджăланă.

ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ Донецкри Индустриальнăй Институтăн малтанхи директорне тата организаторне Исай Маркович **Пугача** награджăланă.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе 3 çынна награджăланă.

«Знак Почета» орденĕпе 5 çынна награджăланă.

«За трудовое отличие» медальпе 7 çынна награджăланă. (ТАСС).

МИХАИЛ АНДРЕЕВИЧ АНДРЕЕВ

юлташа ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама кандидата регистрацилеме

Январĕн 30-мĕшĕнче Шупашкар хула Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 23-мĕш номерлĕ округри суйлав комиссин ларăвĕ пулса иртрĕ.

Кун йĕркинче пĕр ыйту — Шупашкар хула Советне депутата суйлама кандидата регистрацилес ыйту тăнă.

Комисси 23-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама Михаил Андреевич Андреев юлташа кандидата регистрацилеме. Андреев юлташ 1908 çулта çуралнă, Шупашкар хулинче пурăнать, ВКП(б) членĕнче 1932 çултанпа тăратъ. ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлет.

Андреев юлташ 23-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама Михаил Андреевич Андреев юлташа кандидата регистрацилеме тăма килĕшӳ панă.

ИВАН ИЛЬИЧ ЗОЛОТНИКОВ

юлташа ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама кандидата регистрацилеме

55-мĕш номерлĕ округри суйлав комисси Шупашкарти гостиницăра ĕçлекен рабочисемпе служащисен пухăвĕ ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама кандидата тăратни çинчен сырнă протокола пăхса тухнă хыççăн, 55-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама Иван Ильич Золотников юлташа кандидата регистрацилеме. Вăл Шупашкар хула Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшӳ панă. Золотников юлташ Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулса ĕçлет.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитаци ĕçне йĕркелерĕмĕр

Тусай ялсоветĕнче (Красноармейский р.) иртнĕ çулта агитколлектив йĕркеллĕ ĕçлемен. Агитаторсене ĕçре пулăшса пыракан пулман, çавăнпа та ĕççыннисем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе япăх туса пынă. Агитколлектив руководителĕ Ф. Васильев юлташ 1940 çул хушшинче агитаторсемпе икĕ канашлу туса ирттернипе лăпланса ларнă.

ВКП(б) райкомĕ Тусайри агитколлективăн ĕçне вăйлатас шутпа агитколлектив руководителĕ пулса ĕçлеме мана çирĕплетрĕ. Парти шанса панă ĕçе хаваласнах тытăнтăм. Чи малтанах агитаторсен составне пăхса тухрăмăр, 18 çынтан агитколлектив организацилерĕмĕр. Коллективра колхозри стахановецсем, учительсем, агрономсемпе зоотехниксем тăраççĕ.

Ялти интеллигенци хушшинче Рязань облаçĕнчи Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе каланине сӳтсе-явăмăр. Сакăн хыççăн Тусайри интеллигенци хавасланса ĕçлеме тытăнчĕ. Агитаци ĕçне туса пыма план туса çирĕплетрĕмĕр. План тăрăх доклад семпе калаçусем чылай ирттерме палăртнă. Çак кунсенче колхозниксем валли «Ленин тата Сталин ĕç дисциплини çинчен» тата «17 çул Ленинсăр — Ленин çулĕпе» темăсемпе доклад туса панă.

Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вăрман хатĕрлевĕ пирки йышăннă постановление сӳтсе-явăмăр. Партипе правительство решенине колхозниксем ырларĕç. Тепĕр кунне 40 çын вăрман хатĕрлеме тухса кайрĕç.

Ялсоветне кĕрекен колхозсенче агрокружоксем организациленĕ. Агитаторсем кружоксен ĕçне те активлăн хутшăнаççĕ.

А. Киселев.

Агитколлектив руководителĕ.

—★—

Партиллĕ ĕç те çук, хуçалăха та ертсе пымасть

ИĔПРЕÇ. Шăртан ялĕнчи парти кандидачĕсен группине 1939 çулта кĕркунне организациленĕ. Халĕ кунта пурĕ 6 коммунист, вĕсенчен парти членĕсем 2 çын, кандидатсем 4 шутланаççĕ.

Парти кандидачĕсен группинчи коммунистсем пĕлӳ тĕлĕшĕнчен нумай вĕреннĕскерсем тата вĕсем ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Сăмахран, парторг Кадкин юлташ — туллимар вăтам шкул директорĕ, О. Кадкина — шкулти преподаватель, Г. Рябчиков юлташ — «Заря» колхозăн председателĕ пулса ĕçлеççĕ. Çапла вара кунта парти кандидачĕсен группин ĕçĕсене лайăх туса пыма пур условисем те пур.

Анчах парторг Кадкин юлташ парти ĕçĕпе питех интересленменнине пула вăл кандидатсен группин ĕçне йăлтах япăхтарса янă. Коммунистсен пухăвĕсем вăхăтра пулса иртмеççĕ, пулсан та ячĕмĕн кăна пулаççĕ. Кандидатсен группине организациленĕренпе пурĕ те 15 пуху çеç пулнă. Парти кандидачĕсен кандидат стажĕн срокĕсем тахçанах иртсе кайнă, анчах вĕсене парти членне куçарас ыйтупа никам та ĕçлемест тата кандидатсем хăйсем те члена куçма хатĕрленмеççĕ.

Парторг Кадкин парти хуçалăхне юхăнтарса янă. Пуху протоколĕсене вăхăтра йĕркелемеççĕ. Пухусенче нимĕн çинчен каламан решенисем çеç йышăнаççĕ. Коммунистсен иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ пухăвĕн протоколне ку таринчен те йĕркелесе çитермен.

Коммунистсем хушшинче парти историне вĕренес ĕç начар тăрать. Рябчиковпа Илларионова коммунистсем тата парторг Кадкин юлташ хăй те парти историн «Кĕске курсне» халĕ те вĕренме тытăнман.

Кадкин юлташ агитколлектив руководителĕ шутланса тăрать. Анчах ку ĕçре вăл нимĕн те тумасть. Коммунистсем хушшинче те, колхозниксем хушшинче те ВКП(б) Центральный Комитечĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пухасси çинчен пĕлтернине сӳтсе-явман. Çавна пула колхозра нимĕнле производствăллă çĕкленӳ те çук.

«Заря» колхоз пур ĕççемпе те кая колса пырать. Иртнĕ çул тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕртмесĕр тырра уя нумай тăкса хăварчĕç. Авăна вăхăтра çапса пĕтереймерĕç. Итем çинче халĕ те çапман сĕлĕ капанĕсем пур. Колхоз çĕрулмине çĕртсе янă. 97 центнер выльăх кăшманне çĕртсе ярса çырмана кăларса тăкнă.

Колхозра кăçалхи çуракине хатĕрленес ĕç те вăраххăн пулса пырать. Вăрлăхсем таса мар, пăрса вăрлăкĕ тачах акма юрăхсăр. Пĕлтĕрхи кантăра халĕ те çапманнипе кантăрвăрри çук. Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини япăха кайнă.

Çаксем вĕсем пĕтĕмпех колхоз председателĕн Г. Рябчиков юлташăн тимсĕрлĕхĕнчен килнĕ.

Колхозри çитменлĕхсем çинчен парторг Кадкин пĕлнĕ. Анчах вăл та колхозри ĕççемпе интересленмен.

Кадкин шкул ĕçне те юратсах каймасть. Шкул вутăсăр ларать. Ачасем шкула сӳресси тата вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси питех те начар.

Парти кандидачĕсен группи шкулти тата колхозри пуçламăш комсомол организацисене ертсе пымасть.

Шăртан ялĕнчи парти кандидачĕсен группинче ВКП(б) райкомĕн инструкторĕсем те чылаях пулкаланă, анчах кандидатсен группин ĕçĕн результачĕсем курăнмаççĕ-ха.

Ф. ЗАХАРОВ.

—★—

Партпорученисене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пыраççĕ

СЕНТЕР. Райсовет исполкомĕнчи пуçламăш парторганизаци коммунистсене партпоручени парса, партиллĕ ĕçе хутшăнтарса, ĕçлеме вĕрентсе пырать. Райсовет исполкомĕнчи работниксем хушшинче партипе правительство йышăннă решенисене ăнлантарса парас тата хаçат-журналсем сарас тĕлĕшпе çамрăк коммунист К. Бычкова юлташ тăрăшса ĕçлет. Парторганизацин юлашки пухăвĕнче Бычкова юлташ партпоручанисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен каласа пачĕ. Пуху Бычкова юлташ поручанисене аван пурнăçа кĕртсе пынине палăртрĕ.

Коммунист И. Семенов юлташа çар ĕçне вĕренессине йĕркелеме хушнă. Вăл парти поручанине çине тăрсах пурнăçлама тытăнчĕ. Осоавиахим ĕçĕ те лайăхланса пырать.

Шуйцев коммунист агитаци ĕçне йĕркеллĕ туса пынине палăртмалла. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тăрăшса тăвать.

Пуçламăш парторганизаци енчен комсомол тата обществăллă организацисене ĕçре пулăшса, ертсе пырасси чылаях лайăхланчĕ. Вĕсем пурте план тăрăх ĕçлеççĕ.

Г. Соловьев.

Çамрăк стахановецсен слечĕ

1941 çулти февралĕн 2-мĕшĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем республика столицине йĕлтĕрсемпе килаççĕ. Кунта вĕсем 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсенчи паха опытсем çинчен сӳтсе-явса, вăл опытсене ытти колхозсенче те сарса пымалли майсене палăртаççĕ. Çавăн пекех, тырпул тухăçне ӳстерес енĕпе тумалли ĕçсене палăртса хăвараççĕ.

Социализмлă çĕрĕçĕнче çамрăксем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Комсомолецсен колхозсенчи производство ыйтăвĕсене пурнăçлас ĕçре малти ретре пулмалла. Çамрăксен колхоз производствинче чи йывăр ĕçре ĕçлесе ялхуçалăхĕнче пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешмелле. Комсомолецсен вăйлă тырпулшăн тата пысăк тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешес çĕрте хастарлă организаторсем пулмалла, колхозри союзра тăман çамрăксене пурне те ертсе пымалла.

Колхозра тӳрĕ кăмăлпа тата стахановла ĕçлесе пыракан çамрăксем ĕçĕнлăх тĕслĕхĕсене кăтартса слет делегачĕсем пулма тивĕç илчĕç. Вĕсем вăйлă тырпул туса илесси çанталăкран мар, çĕрĕçĕнче ĕçлекенсенчен хăйсенчен килнине аванах кăтартса пачĕç. Çутçанталăк пуянлăхĕсемпе ялхуçалăхĕнче усă курма тĕплĕн пĕлнине те кăтартрĕç. Иртнĕ çулта çанталăк уяр пулнă пулин те ялхуçалăхĕнче малта пыракансеммĕн чăрмавсем кӳмен. Вĕсем уяр çанталăка çĕнтерсе вăйлă тырпул туса илчĕç.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем сывлăх енчен те тĕреклĕ çамрăксем. Слета кайма йĕлтĕрсем çине тăрса аякри çула хăюллăн тухрĕç. Кунта килме хатĕрленнĕ вăхăтра, йĕлтĕрпе тренировкăсене сӳренĕ май, вĕсем хăйсен районĕнчи колхозсенче пулма ĕлкĕрчĕç, пĕр-пĕрин ĕçĕнчи опытсемпе паллашрĕç.

Çăмахран, Иĕпреç тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчен килнĕ командăсем чылай колхозсенче çуракине мĕнле хатĕрленесе çитнине тĕрĕслесе тухнă. Иĕпреçрен килнĕ команда «МОПР», «Красный металлист» тата ытти колхозсенче темиçе хутчен те пулнă. Вĕсем колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре хăйсен сĕнĕвĕсене парса пулăшнă, ĕçри çитменлĕхсене кăтартса панă.

Слет гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес ĕçе анлăн сарса пырас çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăнине пĕр иккĕленсе тăмасăрах калама пулать. Çамрăк та хастар колхозниксем çуракине большевикла кĕтсе илме тивĕçлипе пулăшасси пуриншĕн те палла.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем вăйлă тырпул туса илес ĕçре колхозри пур майсемпе те туллин усă курнă. Вĕсем юр тытас, вырăнти удобренисене хатĕрлес, вăрлăхсене сортлас, ялхуçалăх машинисемпе ытти инвентарьсене юсаса хурас ĕçсене пысăк хастарлăхпа пурнăçланă. Нумай колхозсем вăрлăхсене алăпа суйланă, çитес çуракинче акма пысăк пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрлесе хунă. Çаксем вĕсем пурте вăйлă тырпул туса илес ĕçе татса параççĕ.

Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри комсомолецсем колхоз производствинче кирлĕ специальноссене вĕренме тытăнтăç, вĕсем обществăллă хуçалăха тĕреклетоссишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Плотниксем, машиноведсем пулма, кирпĕч тата черепица тума монтер пулма, кĕпе-тумтирсем çĕлеме т. ыт. те вĕренеççĕ. «Динамо» колхозри комсомолецсем чаплă пуçарăвпе пур колхозсенче те анлăн сарса пымалла. Колхоз производствинче кирлĕ специальноссене вĕренме ятарласа кружоксем организацилес пулать.

Тырпул тухăçне ӳстересси агротехника ыйтăвĕсене тĕплĕн пĕлнинчен тата вĕсемпе практикăллă ĕçре анлăн усă курнинчен нумай килет. Çавăнпа та комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсен агротехникăна тĕплĕн тата тăрăшса вĕренсе пымалла.

Слет участникĕсем агротехникăпа туллин усă курса вăйлă тырпул туса илнĕ. «Прогресс» колхозри (Красноармейский р.) уйхир ĕçĕсен бригадин бригадирĕ М. А. Актонов иртнĕ çулта агротехника ĕçĕсене вăхăтра тата науçенчен тĕрĕс пăхăнса пурнăçланă. Çакăн пек тунипе унăн бригади гектартан 133 пăт тĕштырă туса илнĕ.

Акă тата Молотов ячĕпе тăракан колхоза (Улатăр р.) илер. Унта сӳс-кантăр бригадинчи звеньевой Семенова пысăк тухăçлă сӳс-кантăр туса илнĕ. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ ăна пысăк илттăн медаль парса наградăланă. Ку звено сӳс-кантăр тухăçне ӳстерее ĕçре пĕтĕмпех агротехникăна пăхăнса пынă.

Антоновпа Семенова юлташсем ялхуçалăх ĕçĕнче юратса ĕçлеççĕ. Колхозра стахановла ĕç майĕсемпе анлăн усă курса тырпулсен тухăçне ӳстерсе пыраççĕ. Вĕсем пысăк хастарлăхпа тата тухăçлăн ĕçлесе слета килме тивĕçли пулчĕç. Слетра вĕсем хăйсен ĕç опычĕсене каласа парĕç, вĕсен опычĕсем ытти колхозсенче те тырпулсен тухăçне ӳстерме пулăшĕç.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илесси—çăмăл ĕç мар. Ку вăл ĕçе юратса, пĕтĕм вăя хурса тăрăшса ĕçленинчен килет. Çавăнпа та çамрăксене мĕн пĕчĕкренех практикăллă ĕçсемпе хăнăхтарса пымалла тата ялхуçалăх ĕçĕсене юратса туса пыма вĕрентмелле. Слет çак енчен илсен те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстересси ялхуçалăхĕнче çавтери пысăк ĕç пулса тăрать. Юлашки çулсенче колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес ĕçре чылай пысăк çитĕнӳсем тунă. Ку ĕçре СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени пысăк пулăшу пачĕ. Çак постановлението пурнăçланă, колхозсем вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерсе пыраççĕ.

Колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре комсомолецсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Комсомолецсен чапăпа ĕçлекенсенчен ятарласа тунă бригадăсем вылăхсене усрамалли витесем турĕç та витесенчи шатăксене сивĕ кĕресрен пиçĕрсе тухрĕç. Çавăн пекех вылăх апачĕсем: силос хывас, çулçăсем пухас ĕçре те тăрăшса ĕçлерĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра комсомолецсен вăйĕпе 40 çуç вырнаçмалăх чăх-чĕп вити туса лартнă. Кунсăр пуçне 70 тонна силос хывнă.

Кăçал январь уйăхĕнче республикăри пур районсенче те вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çамрăк колхозниксен канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Вăл канашлусенче 3000 çын пулнă. Вĕсем колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлесе пынă. Канашлу участникĕсем вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе çине тăрса ĕçлеме пулчĕç.

Элĕк районĕнчи çамрăк колхозниксен канашлăвĕнче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем пурĕ 340 çын пулнă. Вĕсем пĕр-пĕрин опычĕсемпе палăшса, вылăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе практикăллă ĕçсемпе хăнăхтарса пымалла тата ялхуçалăх ĕçĕсене юратса туса пыма вĕрентмелле. Слет çак енчен илсен те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстересси ялхуçалăхĕнче çавтери пысăк ĕç пулса тăрать. Юлашки çулсенче колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес ĕçре чылай пысăк çитĕнӳсем тунă. Ку ĕçре СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени пысăк пулăшу пачĕ. Çак постановлението пурнăçланă, колхозсем вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерсе пыраççĕ.

Колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре комсомолецсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Комсомолецсен чапăпа ĕçлекенсенчен ятарласа тунă бригадăсем вылăхсене усрамалли витесем турĕç та витесенчи шатăксене сивĕ кĕресрен пиçĕрсе тухрĕç. Çавăн пекех вылăх апачĕсем: силос хывас, çулçăсем пухас ĕçре те тăрăшса ĕçлерĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра комсомолецсен вăйĕпе 40 çуç вырнаçмалăх чăх-чĕп вити туса лартнă. Кунсăр пуçне 70 тонна силос хывнă.

Кăçал январь уйăхĕнче республикăри пур районсенче те вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çамрăк колхозниксен канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Вăл канашлусенче 3000 çын пулнă. Вĕсем колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлесе пынă. Канашлу участникĕсем вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çине тăрса ĕçлеме пулчĕç.

Элĕк районĕнчи çамрăк колхозниксен канашлăвĕнче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем пурĕ 340 çын пулнă. Вĕсем пĕр-пĕрин опычĕсемпе палăшса, вылăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе практикăллă ĕçсемпе хăнăхтарса пымалла тата ялхуçалăх ĕçĕсене юратса туса пыма вĕрентмелле. Слет çак енчен илсен те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çăмахран, Октябрьский районри Кĕчкей ялсоветĕнче суйлав чухне кирлĕ çынсăр хăварнă пулнă.

Суйлавçăсен списокĕ — государство документчĕ. Суйлавçăсен списокĕсене, тирĕн çĕршывра государствăн ытти документчĕсене тĕплĕн тунă пекех, ответлăха туйса тата тĕплĕн тăвас пулать.

Ялсоветсен исполкомĕсем суйлав чухне кирлĕ япаласене тирпейлĕ пăхса усрани çинчен калакан тĕслĕхсем те пур-ха.

Сăмахран, Октябрьский районри Кĕчкей ялсоветĕнче суйлав чухне кирлĕ çынсăр хăварнă пулнă.

Суйлавçăсен списокĕ — государство документчĕ. Суйлавçăсен списокĕсене, тирĕн çĕршывра государствăн ытти документчĕсене тĕплĕн тунă пекех, ответлăха туйса тата тĕплĕн тăвас пулать.

Ялсоветсен исполкомĕсем суйлав чухне кирлĕ япаласене тирпейлĕ пăхса усрани çинчен калакан тĕслĕхсем те пур-ха.

Сăмахран, Октябрьский районри Кĕчкей ялсоветĕнче суйлав чухне кирлĕ çынсăр хăварнă пулнă.

Суйлавçăсен списокĕ — государство документчĕ. Суйлавçăсен списокĕсене, тирĕн çĕршывра государствăн ытти документчĕсене тĕплĕн тунă пекех, ответлăха туйса тата тĕплĕн тăвас пулать.

Ялсоветсен исполкомĕсем суйлав чухне кирлĕ япаласене тирпейлĕ пăхса усрани çинчен калакан тĕслĕхсем те пур-ха.

Суйлав кампанийĕ сарăлса пырать

Уйрăм суйлав округĕсем тăрăх СССР Верховный Советне тата ĕççыннин депутачĕсен вырăнти Совечĕсене çĕнĕрен депутатсем суйламалли суйлав кампанийĕ Вăрмар районĕнче сарăлса пырать. 499-мĕш номерлĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноссен Советне депутата суйланипе пĕрлех Çĕнĕ Кавал, Урнар, Кавал, Кив Вĕрнер ялсовечĕсене — пурĕ 8 депутат суйламалла. Январĕн 24—25-мĕшенче районри пур колхозсенче те пулса иртнĕ колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕсем СССР Верховный Совечĕн Национальноссен Советне тата ĕççыннин депутачĕсен вырăнти Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратас ыйтăва сӳтсе-явăрç. Районра малта пыракан «Арабось» колхоз колхозникĕссемпе колхозницисем СССР Верховный Советĕн Национальноссон Советне депутата суйлама Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне С. Е. Белолипецкий юлташа кандидата тăратрĕç. Арапуçĕнчи «Арабось» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем тăратнă кандидата районри пур колхозсенче те ырласа йышăнчĕç.

Ĕççыннин депутачĕсен ял Совечĕсене депутата суйлама хастарлă ĕçлекен çынсене кандидата тăратаççĕ. Çĕнĕ Кавал ял Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем пурте тăрăшса ĕçлекенсем. Кунта пурĕ 3 кандидат тăратнă. Вĕсенчен ялти учительница Е. Тропикова юлташ, Спортинвентарь фабрикинчи столярнăй цех начальникĕ И. Семенов юлташ. Вăл 1940 çулти производствăллă плана хăйĕн цехĕпе 102 процент тултарчĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Хисеплĕ грамотăпа наградăланă.

Хĕрлĕ Çырти «Хĕрлĕ Кĕтне» колхоз членĕсем суйлава çуракине хатĕрленсе çитнипе, вăрман хатĕрлес плана тултарнипе кĕтсе илме пулаççĕ. Çак ыйтусене сӳтсе-явнă май 5 единоличник хуçалăхĕ колхоза кĕнĕ. Н. Молостовкин, Я. Филиппов, Г. Сапаркин, Ф. Николаев агитаторсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Агитаци ĕçĕ вăйлăн сарăлса пырать. Кавал ялĕнче 44 агитатор ĕçлет. Агитаци ĕçĕ ялта çеç те мар, вăрмана ĕçлеме кайнă колхозниксем хушшинче те йĕркеллĕ пырать. Чулкасри «Свобода» колхозран вăрманта 40 çынна яхăн ĕçлеççĕ. Ку колхозран çитес суйлав çинчен агитаци ĕçне тума пĕр çын уйăрса вăрмана янă.

Участоксенчи суйлав комиссисем хăйсен ĕçĕсене тытăнса, суйлав сурчĕсене тата суйлаврă кирлĕ пулакан ытти япаласене те хатĕрлеççĕ. Вăрмар районĕнчи магазинсенче лампа трубисем çук. Вĕсене кӳрсе килес тĕлĕшпе райпотребсоюзăн васкас пулать.

Январĕн 26-мĕшне ĕççыннин депутачĕсен ялсенчи Совечĕсен исполкомĕсем суйлавçăсен списокĕсене туса пĕтерсе пурне те пăхса тухма кăларса çакнă. Списоксене нумай ял Совет исполкомĕсем тĕрĕс тунă, анчах Кив Вăрмар ял Совет исполкомĕ тунă список çинче йăнăшсем нумай. Ку ялсовет суйлавçăсен списокне тĕплĕн тăвайман. Хăшпĕр суйлавçăсем сиксе юлнисĕр пуçне, ятне, ашшĕ ятне пăсса çырса пĕтернĕ.

Суйлава хатĕрленес ĕç пуринчен ытла Вăрмар поселокĕнче начар пырать. Суйлавçăсемшĕн суйлав комисси хăш суртра ĕçленине ку таринченех паллă мар.

Т. КОЖИН.

—⊙—

Суйлавсене хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн

Пирĕн республикăри виçĕ суйлав округĕнчен СССР Верховный Советĕн Национальноссен Советне тата уйрăм суйлав округĕсем тăрăх Чăваш АССР Республикинчи ĕççыннин депутачĕсен вырăнти Советĕсене депутатсем суйлас кун — февралĕн 16-мĕш — çитесси икĕ эрне юлчĕ.

Республикăри предприятисенче рабочисем тата колхозсенче колхозниксем Совет Союзĕн Верховный Советне тата вырăнти Советсене депутата суйлама Ленин — Сталин партийĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан сынсене палăртрĕç. Национальноссен Советĕн депутатне суйлама кандидата ВКП(б) Чăваш Область Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕне Чарыков юлташа, виççĕмĕш секретарĕне Павлов юлташа тата Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне Белолипецкий юлташа палăртнă.

Çĕмĕрле хула Советĕн депутатне суйламалли кандидата чугунçулăн 3-мĕш линейнăй участокĕн начальникне Н. А. Николаев юлташа палăртнă, — ăна Халкин-Гол патĕнчи çапăçусенче паттăр пулнăшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă; çавăн пекех тата ку хула Советне депутата суйлама районри сывлăх пайĕн заведующийĕ пулса ĕçлекен С. И. Иванов юлташăн кандидатурине палăртнă, — ăна та бюрофинсене хирĕç çапăçнă чухне паттăр пулнăшăн «За отвагу» медальпе наградăланă.

Комсомольский районри Советăн депутатне суйлама ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлекен Г. В. Сочков юлташăн кандидатурине палăртнă. Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Чурачăк ялсовечĕн депутатне суйлама кандидата Грошев юлташа палăртнă, Грошев юлташ ВЛКСМ членĕ, промысла артелĕн председателĕ, вăл председатель пулса ĕçлеме тытăннăранпа артель çуллен-çулах производство планне иртерсе тултарса пырать. Вăрнар районĕнчи Кольцовка ялсоветне депутата суйлама Сталин ячĕпе тăракан колхозри стахановла виççĕмĕш бригадăра ĕçлекен колхозницăн, ВЛКСМ членĕн Т. А. Катанаева юлташăн кандидатурине палăртнă. Рабочисемпе колхозниксем пур çĕрте те вырăнти Советсен депутатне суйлама кандидата çакăн пек ĕçре палăрнă, халăх ĕçĕшĕн шанчăклă тăракан сынсене палăртса хунă.

Чăваш республикин территорине пуçлас суйлавсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă куннпа пĕр ĕçле килеççĕ. Çак чаплă кунсене хăгĕрленсе, республикăри ĕççыннисем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç, вĕсем çак палла куна производствăра тата ялхуçалăхĕнче те çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитме обязательство илчĕç. Иртнĕ çул колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 180 пăт тĕштырă туса илнĕ пулсан, кăçалхи çул колхозниксем кашни гектартан 200 пăт тырă туса илесшĕн. «Большевик» колхозри колхозниксем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле çуракине хатĕрленсе çитессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Республикăри промышленность предприятийĕсем те партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнине чылаях пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. Çĕмĕрлери «Большевик» завод коллективĕ, сопиализмлă ăмăртăва анлăн сарса, 1940 çулти производство планне 101,2 процент тултарнă, халĕ 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн кĕрешет. Çак заводри диффузорщик Никифоров юлташ, пыларщица Воробьева юлташ, котельщик Кощеев юлташ т. ыт. те кулленхи нормăсене 125—200 процент таран тултарса пыраççĕ.

Канашри депора партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе 11 çынтан колонна организацилеНĕ. Поезд ывăрăшĕ норма тăрăх 1.600 тонна пулмалла пулсан, Назаров тата Веденский машинистсем 2.000 тонна йывăрĕш поездсем илсе çӳреççĕ.

СССР Верховный Советне суйламалли 506,499-мĕш №-лĕ суйлав округĕсенче суйлав умĕнхи канашлусем пулса иртрĕç, — ку канашлусенче организацисемпе предприятисен тата колхозсен представителĕсем СССР Верховный Советне депутата суйламалли кандидатсем çинчен калаçса татăлчĕç тата доверенăйсем суйласа хăварчĕç. Доверенăйсем çак кунсенче пысăк ĕçсем туса иртрĕмелле.

Пурте пĕлеççĕ, суйлав ăнăçлăн иртесси суйлав участокĕсенче политикăллă тата организацилле ĕççене мĕнле туса пынинчен килет. Организацилле-техникăллă ыйтусене большевикла татса парасси суйлавсене хатĕрленес ĕçĕн уйăрăлми пайĕ пулса тăрать.

Суйлав участокĕсенче суйлавçăсен списокĕсене пурте пăхса тухма кăларса çакнă. Анчах хăшпĕр участоксенче суйлавçăсен списокĕсене, тăвас ĕç çине ответсăр пăхнисем те тĕл пулаççĕ-ха. Çăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ижекей ялĕнчи пĕр урамра пурăнакан суйлавçăсене пурне те списока кĕртмесĕр хăварнă пулнă.

Суйлавçăсен списокĕ — государство документчĕ. Суйлавçăсен списокĕсене, тирĕн çĕршывра государствăн ытти документчĕсене тĕплĕн тунă пекех, ответлăха туйса тата тĕплĕн тăвас пулать.

Ялсоветсен исполкомĕсем суйлав чухне кирлĕ япаласене тирпейсĕр пăхса усрани çинчен калакан тĕслĕхсем те пур-ха.

Сăмахран, Октябрьский районри Кĕчкей ялсоветĕнче суйлав чухне кирлĕ çынсăр хăварнă пулнă.

Суйлавçăсен списокĕ — государство документчĕ. Суйлавçăсен списокĕсене, тирĕн çĕршывра государствăн ытти документчĕсене тĕплĕн тунă пекех, ответлăха туйса тата тĕплĕн тăвас пулать.

Ялсоветсен исполкомĕсем суйлав чухне кирлĕ япаласене тирпейсĕр пăхса усрани çинчен калакан тĕслĕхсем те пур-ха.

Сăмахран, Октябрьский районри Кĕчкей ялсоветĕнче суйлав чухне кирлĕ çынсăр хăварнă пулнă.

Суйлавçăсен списокĕ — государство документчĕ. Суйлавçăсен списокĕсене, тирĕн çĕршывра государствăн ытти документчĕсене тĕплĕн тунă пекех, ответлăха туйса тата тĕплĕн тăвас пулать.

Ялсоветсен исполкомĕсем суйлав чухне кирлĕ япаласене тирпейлĕ

НИТРАГИН

Нитрагин — вăл пăрça йышши тырăсене тата клевера кирлĕ бактериллĕ удобрени. Вăл тĕрлĕрен пулать: пăрçан, викăн, ясмăкăн, люцернăн, клеверăн. Пăрça валли тунă нитрагин пăрçашăн çеç усăллă, çавăн пекех вика нитрагинĕ те — викăшăн, ясмăкăн — ясмăкшăн çеç усăллă т. ыт. те.

Пур культурăсем валли те завод туса кăларакан нитрагина уйрăм банкăпа, кашни пĕр е икĕ гектара кирлĕ чухлĕ порцине хатĕрлеççĕ. Пĕр гектар валли хатĕрленĕ нитрагин банкин йывăрăшĕ пĕр килограмран ытла мар. Кашни банка çинче нитрагинпа мĕнле усă курмалли çинчен çырса пĕлтерни пур. Нитрагин колхозсене пур удобренирен те йăнĕрех ларать. Пĕр гектар валли хатĕрленĕ нитрагин 2 генкĕ те 32 пус кăна тăрать, турттарма та çăмăл.

Нитрагин пăрça йышши тырăсен тухăçне кашни гектар пуçне 1,5 центнертан кая мар хăпартать. Çавăнпа та Чăваш республикинче 1941 çулта пăрça йышши пĕтĕм тырăсене, клевера нитрагинласа акмалла. Наркомзем планĕ тăрăх Чăваш республикинче çакăн чухлĕ нитрагин кирлĕ (килогрампа):

Нитрагин ячĕсем	гектар шучĕ
1. Пăрça нитрагинĕ	14000
2. Вика нитрагинĕ	6000
3. Ясмăк нитрагинĕ	6000
4. Клевер нитрагинĕ	6000
Мĕнпурĕ	32000

Çак план тăрăх Сельхозхимснабăн Чăваш республикинчи контори пур тĕрлĕ нитрагинсене те заводран кăрсе килнĕ. Вĕсене Канашра, Вăрмарта, Çĕмĕрлере, Улатăрта тата Шупашкарта ма илме пулать.

Наркомзем нитрагин туянас тĕлĕшпе кашни района план ярса панă, анчах хăшпĕр колхозсем нитрагина сахал турттараççĕ. 32000 гектар валли килнĕ нитрагинран январĕн 20-мĕш тĕлне колхозсем мĕнпурĕ те 1877 гектар валли анчах турттарнă. Ишлей районĕнчи колхозсем 1520 гектар валли илес вырăнне 12 гектар валли анчах илнĕ.

Кувакино, Улатăр, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Çĕрпÿ, Çĕмĕрле тата Етĕрне районĕсенчи колхозсем ку таринччен пĕр гектар валли те нитрагин турттарман.

Халĕ ку таринччен нитрагина мĕнпурĕ те пиллĕк район анчах турттарма тытăннă: Октябрьский, Тăвай, Куславкка, Красноармейский, Элĕк районĕсем. Пăрça йышши тырăсене нитрагинласа акассине агротехникăллă чи паха ĕç вырăнне хурса, çĕрĕç органĕсен, колхозсен ку тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлес пулать.

К. КОСТИН.

Агротехникăна вĕренекенсем

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесен колхозниксемпе колхозницăсен, бригадирсен, колхоз председателĕсен агротехникăна çине тăрса вĕренмелле. Çак ĕçе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен пуçарса, ертсе пымалла. Иртнĕ çулта агротехникăна лайăх вĕреннĕ тата агротехника правилисене вăхăтра, тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынă колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Акă, Калинин ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа гектартан 120 пăт, уйрăм участоксенче 150—160 пăт тĕштырă туса илнĕ. «Победа», «Красная звезда», «Волга», «Сила» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем те гектартан 100—120 пăт тĕштырă пуçтарса илчĕç.

1940 çулта уйрăм колхозсенче агротехникăна вĕренессине организацилемерĕç тата ăна кирлĕ пек пурнăçа кĕртсе пымарĕç. Çакăн пек колхозсем вара начар тухăçлă тырпул туса илчĕç.

Иртнĕ çулти йăнăшсене шута илсе, ВКП(б) райкомĕ колхоз активне тата колхозниксемпе колхозницăсене агротехникăна вĕрентессине организацилерĕ. Колхозсенчи агрозооветкружокссене ертсе пыма районри агрономсене, зоотехниксене тата ветеринари работникĕсене явăçтарнă.

Участокри агроном В. Алексеев юлташ Тĕрер ялсоветĕнчи агрокружока ертсе пырать. Вăл ку вăхăтчен 5 заняти ирттернĕ. Парторганизаци тĕрлĕ çак ĕçе пуçарса пырать. Колхозниксем тата коммунистсем — пурĕ 75 çын агротехникăна тăрăшса вĕренеççĕ, вĕренĕве çуракине хатĕрленессипе çыхăнтарса пыраççĕ.

Ешшик Чуллă ялсоветĕнчи агрокружок та начар мар ĕçлет. Ăна райçĕрĕç пайĕн агрономĕ Алексеев юлташ ертсе пырать. Мăн Шетмĕри кружоксем те аван ĕçлеççĕ, колхозниксемпе колхозницăсем агротехникăна зоотехникăна интересленсе вĕренеççĕ.

Чадукассинчи «Труженик» колхозри агрокружока учитель, ВКП(б) членĕн кандидачĕ С. Матвеев юлташ ертсе пырать. Пурĕ 50 çын вĕренет, занятисем йĕркеллĕ, план тăрăх пулса иртеççĕ.

Çапла февралĕн 1-мĕшне Красноармейский районра 42 агрокружок, 6 зоокружок тунă, вĕсенче 850 çын вĕренеççĕ.

Л. Константинов.
Красноармейский р.

Халĕ те вĕренме тытăнман

Чкаловский районри «Октябрь ялавĕ» колхозăн çĕрĕ ытла тÿрем вырăнта мар. Иртнĕ кĕркунне кăнтăр еннелле тайлăмăн выртакан 28 гектар çĕр çине тулă тата ыраш акса хăварнă. Çак тĕлти юра сил вĕçтерсех тăрать. Апла пулин те юр тытма щитсем е ыраш кĕлтисем лартса, йывăç турачĕсем пăраха тухман. Çак тĕле халех юр тытмасан калчасем шăнса пăсăлма пултараççĕ.

Колхоз агротехникăллă ытти ĕçсене те пурнăçа кĕртсе пымасть. Колхозниксем агротехникăна вĕренесшĕн. Кружок организацилеме йышăннăранпа чылай иртрĕ ĕнтĕ. Колхоз председателĕ (ăна кружок руководителĕ пулма çирĕплетнĕ) Тихонов юлташ тăрăшманнине пула кружокра çак вăхăта çитсе те занятисем пуçланман.

Т. Никитин.

ÇУРАКИ УМĔН

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри чылай колхозсем партин XVIII конференцийĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнăçĕç. Ун пек колхозсем кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешессине сарса ячĕç. Ку ĕçре Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунист Давыдов) пример кăтартса пырать. Кунта агротехникăллă ĕçсенчен чылайăшне пурнăçланă та ĕнтĕ. Паянхи куна илсен уя 1228 тонна торф, 400 тонна юшкăн кăларнă, 177 центнер минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ, 68 центнер кĕл, 55 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 250 центнер фекали хатĕрленĕ, унсăр пуçне 5830 центнер торфо-фекали компосчĕ хатĕрленĕ, 380 гектар çинче юр тытнă. Ялхуçалăх машинисене юсаса сарайне пухса лартнă. Сортлă вăрлăхсем улăштармалли плана пурнăçланă, вĕсене тасатса хунă. Кунта кашни колхозникех хăйĕн ĕçне пĕлсе тăрать. Стахановецсенчен чи малтан Г. Ботников колхознике кăтартма кирлĕ. Вăл пĕр кун сиктемесĕр ĕçлет, заданине 2 хут ытла тултарса пырать.

Урхас Кушкăри «Звезда» колхозра та юлашки вăхăтра уйрăмăнах лайăх ĕçлеме тытăннă. Вырăнти удобренисене пухас тĕлĕшпе уйрăм колхозниксене çирĕплетнĕ. 20 кун хушшинче кăна 156 тонна торф, 32 центнер кĕл, 7 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Çак кунсенче 95 центнер минераллă удобренисем кÿрсе килчĕç.

Çириккассинчи «Комбайн» колхозра агротехникăллă ĕçсене тунипе пĕрлех, парти конференцийĕ уçăличчен вăрман хатĕрлес плана пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. «Кăнар» вăрманĕнче кунсерен 20 колхозникрен кая мар ĕçлеççĕ. Вĕсем кашниех кулленхи заданине ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

К. Т.

Ялхуçалăх выставкин участникĕсем

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, çамрăк натуралистсемпе техниксен ĕçĕсене уйрăм павильонра анлăн кăтартса паraççĕ.

1940 çулта пирĕн Чăваш республикинчен ачасен техникăллă станцинчи 3 кружок тата 11 натуралист выставка участникĕсем пулнă пулсан, кăçал вĕсен хисепĕ чылай ÿсет. Паянхи куна илсен, выставка участникĕсем пулма 20 кандидат çирĕплетнĕ, çак шутран техникăллă станцисенчи кружоксем 7 шутланаççĕ.

„Çĕнĕ Юнга“ колхозăн сысна ферминче

СĔНТĔР. Юнга ялсоветĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхозăн сысна ферми районра чи лайăх фермăсенчен пĕри шутланать. Ку ферма ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă, Главвыставком фермăна иккĕмĕш степеньлĕ диплом, мотоцикл тата 5.000 тенкĕ укçан парса наградăларĕ. Çавăн пекех ферма заведующине Вазиков юлташа тата 8 çул хушши свинарь пулса ĕçлекен Вазикова Феклăна пĕчĕк кĕмĕл медальсем парса наградăланă. Наградăсем сысна ферминче ĕçлекенсене тата колхозниксене татах хаваслантарнă. Вĕсем сысна фермине çулсерен аванлатса пыраççĕ. Иртнĕ çулта сысна ферми валли сĕнерен ăшă çурт туса лартрĕç. Кашни сысна уйрăм пÿлĕмре пурăнать. Вĕсене инструкци тăрăх тăрантараççĕ. Сыснасене пăхакансем сысна е яланах таса тытаççĕ. Çапла пăхса пынипе фермăра çулсерен сыснасем хушшинсах пыраççĕ. Фермăра халĕ пĕтĕмпех ăратлă сыснасем. Çурăсене уйрăм пăхаççĕ, вĕсене Фекла Вазикова кирлĕ пек пăхса çитĕнтерет. Пĕр тăкăра ку çурăсем 600—650-шар грамм хутшăнса пыраççĕ.

Сысна ферминчен колхозниксене кашни çулах çурăсем параççĕ. Халĕ «Çĕнĕ Юнга» колхозра сысна усраман колхозник çук та, пурте сысна ĕрчетеççĕ. Иртнĕ 1940 çулта сысна ферми 40 пин тенкĕ тупăш панă.

Колхоз государствăна 1941 çулшăн 1000 килограмм аш-какай панă.

Фермăра ĕçе питĕ аван йĕркеленĕ. Унта колхозри чи лайăх колхозниксем ĕçлеççĕ.

Фермăра ĕçлекенсем сыснасене зоотехника енĕпе мĕнле пăхмаллине кружокра вĕренеççĕ. Ку ĕçе вĕсем «Свинотоварная ферма» ятлă журнал тăрăх вĕренсе пыраççĕ.

Пр. ЯРГУНЬКИН.

Тимĕрçсен ăмăртăвĕ

— Ялхуçалăхри ĕçсене ăнăçлăн туса пырасси — машинăсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа юсанинчен килет, çавăнпа та эпĕ машинăсене юсас ĕçе вăхăтра тытăнтăм, — тет «Красный пахарь» колхозри тимĕрçç А. Скворцов юлташ. Вăл плугсене декабрь уйăхĕнчех юсаса пĕтернĕ. Халĕ ытти машинăсене юсать.

Районри чылай тимĕрçсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пуçланнă ăмăртăва хутшăнчĕç. Ишлей МТС мастерскойĕнчи тимĕрçç Кузнецов юлташ халиччен аякран кÿрсе килнĕ чаçсене кăçал вырăнтах, МТС мастерскойĕнчех туса кăларассине организацилерĕ. Вăл тĕрлĕрен чаçсене 200 ытла хатĕрленĕ. Токарьсем малтан Кузнецов юлташ тунă чаçсене «нимĕн те ĕç тухмасть» тесе йышăнман пулнă. Каярахпа вара токарнăй станок çинче Кузнецов тунă вентилятор валикĕсене якатса пăхсан, вăл заводра тунинчен пĕрре те начар марри курăннă. Халĕ вентилятор валикĕсене 40 штука ытла тунă. Ку чаçсене вырăнтах хатĕрленĕ май тракторсене юсас ĕç чылай малалла кайрĕ.

Свердлов ячĕпе тăракан колхозри Васильев тимĕрçç те Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă тĕле икĕ колхозăн ялхуçалăх машинисене (уборкăра ĕçлемеллисене те) пĕтĕмпех юсаса пĕтерессишĕн тăрăшать. Вăл халĕ плугсене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ. Васильев юлташ кулленхи ĕç нормине 110—120 процент тултарать.

С. ГОРЛАНОВ.

Выставка участникĕ

Иван Моисеев Шăхасан машинно-тракторнăй станцинче пиллĕкмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. 1936 çулта вăл трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухса, чи малтанхи хут трактор çине ларать. Пирвайхи çулсенчех плана 150—200-шер процент тултарса пынă. Лайăх ĕçленине кура 1938 çулта И. Моисеев юлташа трактор бригадин бригадирне лартаççĕ.

Моисеев юлташ бригади—МТ Станцинче малта пыракан бригадăсенчен пĕри. Кашни çулах плана ытлашшипех тултарса малти вырăна тухать. И. Моисеев юлташ кăçалхипе виççĕмĕш çул Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕçлĕ пулчĕ.

Иртнĕ çулта МТС тракторсемпе ĕçлемелли плана 112 процент тултарнă пулсан, Моисеев бригади хăйĕн планне 127 процент тултарнă. Унăн бригадинчи чи лайăх тракторист Александр Анисимов иртнĕ çулта хăйĕн сменинче плана 300 процент тултарнă. Çавăн пекех Илларионов, Платонов трактористсем те хăйсен планне 150—200 процент таран тултарнă.

Моисеев бригади кашни çулах Филиппов бригадипе ăмăртса ĕçлет. Кăçал та вĕсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Партконференци уçăлнă тĕле трактор сене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме обязательство илнĕ вĕсем. Моисеев бригадин 4 трактор юсамалла пулсан, паянхи куна вĕсем 3 трактор юсаса кăларнă.

А. СОЛОВЬЕВ.

Колхозри агровĕренÿ

ИШЛЕЙ. «Хĕрлĕ танк» колхозра агротехникăна вĕренме стахановла шкул организациленĕ, шкула 36 колхозник çÿрет. Унта колхозри бригадирсем, звеноводсем тата колхоз активĕпе колхозри стахановецсем вĕренеççĕ. Занятисене колхоз председателĕ П. Павловпа колхозри агротехник Смирнов юлташсем ертсе пыраççĕ. Халь 3 заняти пулса иртнĕ. Пĕрремĕш занятине районри çĕрĕç пайĕн старший агрономĕ Федоров юлташ ирттерчĕ, вăл колхозниксене Чăваш АССР Совнаркомĕне ВКП(б) Обкомĕ «Чăваш АСС Республикинчи колхозсенче 1940—41 çулта туса ирттермелли кĕркуннехипе хĕллехи агротехникăллă мероприятисем çинчен», «Тислĕке сыхласа усрассипе усă курас ĕçе организацилесси тата торфпа удобрени вырăнĕнче усă курасси çинчен» тата «1941 çулти çураки валли сортлă тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене улăштарса илмелли план çинчен» йышăннă постановленисене лайăх ăнлантарса пачĕ.

Г. Васильев.

Пограничниксене активлăн пулăшнăшăн Кулиева Лейли Кули-Кызы колхозницăна (Армян ССР) Армян ССР Верховный Советĕн Президиумĕ хаклă парне парса наградăланă. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Кулиева Лейли Кули-Кызы тата пограничник сем — кĕçĕн сержант Д. Д. Лихоded тата красноармеец В. М. Химич (хыçалта).

В .ЕГОРОВ фото-ÿкерчĕкĕ (ТАСС).

Коллективизаци ыйтăвĕпе куллен ĕçлесе пыни çук

ÇĔРПУ. Районри пĕтĕм хресченсенчен 89,9 проценчĕ колхозсене пĕрлешнĕ. Иваново, Сĕнĕ Сала, Рындино ялсовечĕсенчи тата Çĕрпÿ хулинчи пур хресченсем те колхоза кĕнĕ. Çапла ĕнтĕ уйрăм хуçалăхпа асапланса пурăннă хресченсене колхозсене пĕрлешме, тепĕлĕ пурнăç çулĕ çине тухма пулăшас тĕлĕшпе питех те пысăк ĕçсем тунă. Колхоза пĕрлешнĕ хресченсем вунă çул каярахри пек вуншарăн е çĕршерĕн кăна мар, пиншерĕн шутланаççĕ. Колхозлă строй çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пырать. Колхоза кĕрииччен чухăн пурăннă нумай хресченсем ĕмĕрлĕхех телейлĕ пурнăç çулĕ çине тухрĕç. Вĕсен пуласлăхĕ татах та телейлĕ, татах та савăнăçлă.

Çĕршывăн пуянлăхĕпе ырлăхĕ пурне те çитет. Çĕнтерÿллĕ колхоз ялавĕлайне тăнă çынсем çĕршыв ырлăхĕпе ÿллин усă кураççĕ. Хăйсене валли татах та телейлĕ пурнăç çĕнсе илеççĕ. Анчах та пур хуçалăхсем те мар-ха колхозра тăраççĕ. Уйрăмăн пурăнакан хуçалăхсем чылай-ха. Вĕсене пирĕн колхоза кĕме, телейлĕ пурнăç çулĕ çине тухма пулăшмалла. Паллах ĕнтĕ, тÿрĕ кăмăллă хресченсене колхоза кĕме пулăшасси вăл вăхăтран вăхăта мар, куллен туса пынăлли ĕç. Çавăн пек ĕçлеме вĕрентет пире коммунистсен партийĕ. Анчах та районри парти, совет организацийĕнчи уйрăм работниксем çакна халĕ те ăнланса илмен-ха. Коллективизаци ĕçĕ хăй тĕллĕнех вĕçленсе çитессе шанмăн вĕсем. Хăшпĕр работниксем тата: колхоза кĕмелле пеккисем пурте кĕнĕ ĕнтĕ, ытти хуçалăхсем кĕрессе шанмаллинех те çук, тесе шутлаççĕ. Питех те тĕрĕс мар тата сиенлĕ шухăш. Çак вăхăта, районĕпе илсен, единоличниксем 875 хуçалăх шутланаççĕ. Иртнĕ çулта колективизаци пурĕ те икĕ процент çеç ÿснĕ. Патăрьел, Ойкасси ялсовечĕсенче иртнĕ çулта колхоза пĕр хуçалăх та илмен. Нумай ялсоветсенче пĕрер е икшер хуçалăха кăна илнĕ. Иккĕмĕш Вăрманкасси ялсоветĕнче единоличниксем 67 хуçалăх, Чурачăк—74, Шортавăш—41, Тĕнсĕр—40, Паваркасси ялсоветĕнче 97 хуçалăх шутланаççĕ.

Единоличниксем колхоза кĕни усăллă пулассине ăнланса илме пултараймаççĕ-и вара? Пултараççĕ. Анчах та колхоз правленисемпе ялсовет исполкомĕсем, колхозсенчи партипе комсомол организацисем вĕсем хушшинче ĕçлемеççĕ. Партипе правительство решенийĕсене çÿтсе-явса вĕренеççĕ. Колхозниксем хушшинче агитаторсем те начар мар ĕçлеççĕ. Ялсовет исполкомĕсемпе партин пуçламĕш организацисем çак ĕçсене ирттернĕ чухне единоличниксене аякка тăратса хăварасçĕç. Ку ĕнтĕ единоличниксене обществăллă пурнăçран пăрса хăварни пулать.

Колхоза кĕнĕ хуçалăхсем хăйсен пурнăçне лайăхлатасçĕç. Колхоз вăл телейлĕ пурнăç хуçалăхĕ. Сĕршер, пиншер хуçалăхсем çакна çирĕплетсе калаççĕ. Аслă Тукалĕнчи 60 çултан иртнĕ колхознике Максимов юлташа илсе пăхар. Колхоза вăл 3—4 çул кая юлса кĕнĕ.— Ахалех иккĕленсе тăнă, колхозра тăрăшса ĕçлесен питех те лайăх пурăнма пулать мĕн,—тет вăл. Кун пек примерсене темĕн чухлех илсе кăтартма пулать.

Массăллă-ăнлантаруллă ĕçе туса пыма вырăнти фактсемех çителĕклĕ. Агитаторсен единоличниксене колхозсем ÿсĕм туса пыни çинчен тĕплĕн каласа памалла. Çапла туннипе тÿрĕ кăмăллă единоличниксене колхоза кĕме пулăшмалла.

Т. МАЙОРОВ.

(Хамăр корр.).

Вăрмар районĕн пуянлăхĕсем

ВĂРМАР. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти чĕтаварсенчен куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларассине ÿстермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановлени районри халиччен тĕкĕнмен пысăк резервсене уçса палăртма пулăмрĕ. Вырăнти промышленность предприятийĕсен, промысла коопераци артелĕсен коллективĕсем постановлението паллашнă хыççăнах хăйсен резервсене тата районри пуянлăхсене уçса палăртма тытăннă, сахал мар резервсем уçса палăртнă та ĕнтĕ.

Ку тарииччен тăмран тунă чÿлмек-чашăксене, черепица, çуна-урапасене ытти çĕртен турттарса килнĕ. Районри ĕçсыннисем тырă авăртма та Куславкка районне çÿренĕ. Кунта хуçалăхра кирлĕ япаласене юсакан мастерскойсем çителĕксĕр пулнă т. ыт. те. Тĕрĕссипе илсен, вĕсене пурне те районрах тума май пур. Вăл ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ туса ирттернĕ канашлура та лайăх курăнчĕ.

Кавалти крахмал завочĕ çумĕнче арман тума пулать. Унтах хуçалăхра кирлĕ япаласене юсакан мастерской, тутлă шывсем тăвакан цех организацилеме май пур. Хĕллехи вăхăтра завод ĕçлемен чухне слесарьсем тата ытти квалификацияллĕ рабочисем аха-лех пурăнаççĕ. Вĕсем машинăсене юсама пултараççĕ. Кусемсĕр пуçне тата завод отхочĕсемпе ĕнесем, сыснасем, сурăхсем, хурт-кăвакал усрама пулать.

Кĕтесленрти пахча-çимĕçсем типĕтекен, пахча-çимĕçсем пĕçерсе продуктсем тăвакан заводсен те таварсем кăларассине ÿстерме тата ассортимента йышлăлатма условисем лайăх. Пахча-çимĕçсем пĕçерекен завод лапша, ушки туса кăларма пултарать. Осипенко ячĕпе тăракан, «Универсал» артельсем продукци кăларассине ÿстерме пултараççĕ. Районра обоз хатĕрĕсем тăвакан, атă-пушмаксем, тумтирсем юсакан мастерскойсем уçма, сĕтел-пукансем тăвакан производствăсем организацилеме пулать т. ыт. те. Суту-илÿ организацисем аллинче те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе самăрлатма мĕн кирлисем пурте пур. Районра пулă хуçалăхне аталантарма, хурт-хăмăр ĕрчетме пулать.

Канашлăва пухăннисем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлението пĕр кăмăлпа ырларĕç тата вырăнти резервсене пĕтĕмпех уçса палăртма, вĕсемпе усă курма татăклă мероприятисем тума сăмах пачĕç.

М. Титов.

Вăрманта ĕçлекенсен хисепĕ темиçе хут ÿсрĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Районри колхозсем вăрман хатĕрлес плана срокчен тултарасшăн кĕрешĕве сарсах пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе вĕсем вăрманта ĕçлеме уйрăм бригадăсем организацилеççĕ, çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ уйăрса параççĕ.

Январĕн 28-мĕшĕнче Çĕмĕрле районĕнчен вăрманта пĕтĕмпе çуран 804 çын, лашапа 458 çын ĕçленĕ. Январĕн малтанхи кунĕсемпе танлаштарсан халĕ вăрманта ĕçлекенсен хисепĕ темиçе хут ÿснĕ.

Ĕç вăйĕ парассипе уйрăмăчах Улхашри «Красноармеец», Хутарти Ленин ячĕпе тăракан, Турханти «Комбинат» колхозсем малта пыраççĕ. Хальхи вăхăтра «Красноармеец» колхозран çуран 48 çын, лашапа 70 çын ытла ĕçлеççĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсем вăрмана тухма халĕ кăна хатĕрленеççĕ-ха. «Триер» колхозран ку таринччен те вăрмана пĕр çын та тухман, «Молодая сила», «Авангард» колхозсенчен лашапа пачах ĕçлемеççĕ, çураннисем те сахал.

Çичĕ сурăхран 13 путек

ВĂРНАР. Пăваялĕнчи «Большевик» колхозра çичĕ сурăх 13 путек туса панă. Çак путексемпе амăшĕсене Мария Кузьмина питĕ лайăх пăхса усрать. Вăл пăхакан сурăхсемпе путексем мăнтăр та самăр. Сурăхсем пăрамлас вăхăт çитерехпе Кузьмина сурăхсенчен уйрăлмасăр вĕсене асăрхаса пурăнчĕ.

К. ГРИГОРЬЕВ.

ВРАЧ КАНАШĔСЕМ

Мăн хырăм язви

Язва тесе питĕ хĕн тата вăрăма кайса тÿрленекен (тепĕр чух тÿрленмен) ÿт е кирек мĕнле органăн витĕмĕн суранне каласçĕ. Ун пек сурансем пур çĕрте те пулма пултараççĕ, сăлтавĕсем те вĕсен тĕрлĕрен. Хăшĕсем чир пирки (сăмахран, сифилис, туберкулез язвисем), теприсем нерва пăсăлнипе пулаççĕ тата ыт. те. Кунта эпир мăн хырăм (желудок) язви çинче чарăнса тăрасшăн. Кунпа чирлекенсем, асапланса пурăнакансем халăх хушшинче сахал мар, вĕсенчен чылайăшĕ тата чир шалта пуçланнипе хăйсене кăна мар, врачсене те пĕлме çăмăл мар пулса тăнипе, пĕлмесĕр каттар тесе пурăнаççĕ. Çакăн пек шутласа чире вăрăма яракансем культурăллă çынсем хушшинче те пур.

Мăн хырăм язви мĕнрен пуçланнине халь медицина тĕплĕн пĕлеймест-ха, унăн сăлтавне вĕреннĕ çынсем пĕрмаях шыраççĕ. Çапах та палла, вăхăтра тата йĕркеллĕ апат çимесĕр пурăннин, ытлашши ĕçни, табак туртни, хырăм каттарне вăхăтра сыватманни т. ыт. пĕр чухне ракпа, нумай чухне мăн хырăм язвипе чирлеме пулăшаççĕ. Çакăнтан курăнать ĕнтĕ, ку чирĕн сăлтавĕсем пĕрре кăна мар. Язва пуринчен ытла мăн хырăмăн пĕчĕк кукăрчăкĕ (малая кривизна), апат-çимĕç тухакан привратникĕ тата пыршă пуçланса каякан луковица çине тухать. Çавăн пирки язва хăш çĕре тухнă майпа, паллисем те унăн пĕрремĕринчен ăраснарах пулаççĕ. Пĕчĕк кукăрчăк çинчи язва какăрш килтермесĕрех пулма пултарать, апат çинĕ хыççăн çур е пĕр сехетренех ыратма пуçлать, ыратни çурăм витĕр шăтарса кăларнă пек туйăнать. Çăмăл апат (сĕт, çу тата ыт.) çисен ыратни тепĕр чух пĕтĕмпех те сисĕнмест, е çăмăлăн иртсе каять. Йывăр апат (çĕрулми, какай, хура çăкăр тата ыт.) хыççăн питех те хытă, хуçлантарса антаричченех ыратать. Çын вара хăйне ăшă тытса е урăх майпа лăплантарма тăрăшать. Анчах ун пек приступ апат хыççăн кăна мар, ĕçлесе е çул çинчемĕнре кисренсен те пулать. Пĕвратникри тата луковицăри язвăсем пĕтĕмпе тенĕ пекех чи малтан какăрш килтернипе пуçланаççĕ. Какăрш килтерни хырăмра кислота ытлашши пулса пынинчен килет. Вăл вырăнсем кислота туса кăларакан клетккасен вырăнĕ шутланаççĕ, язва вĕсене ытларах раздражать тăвать. Кун пек язвăсем апат çинĕ хыççăн 1 çурă е 2 сехетрен ыратма пуçлаççĕ, чылай чух çĕрле те ыратаççĕ. Ыратни пăртак сылтăм аякрарах туйăнать. Йывăр апат, малтанхи пекех, хытă ыратнипе (приступпа) иртсе каять.

Язва кирек ăçта пулсан та, унăн систерекен пĕтĕмĕшлĕ паллисем çакăсем пулаççĕ: 1) ыратни пур чух та мар, пуринчен ытла йывăр апат е кисренсе ĕçленĕ хыççăн приступ майлă пулса пырать, 2) йĕклентерни е хăстарни, ыратнипе пĕрлех, апат хыçăн пулать, чылайăшĕ аптраса хăйсем пÿрне чиксе хăсма тăрăшаççĕ, вара пăртак çăмăл пек туйăнать, 3) çăвартан е тула тухсан юн кайни язва тĕлĕнче юн тымарĕсем татăлсан пулать. Çакăн пек паллăсем куç умĕнче пулсан, паллах, иккĕленмесĕрех язва чирĕ çинчен шутламалла. Чир шалалла, вăрăма кайсан урăх паллăсем те пулма пултараççĕ. Сăмахран, язва пирки апат çулĕ питĕрĕнме пуçласан çынна кашни çимессеренех хăстарса кăларать, хытă апат пĕртте кайми пулать, язва тĕлне ытти органсем çыпăçса ларсан пăртак кисренсенех хырăм ыратма пуçлать тата ыт. те.

Язва чирĕ пĕрмай пĕр пек пымасть. Хăш вăхăтра (нумай чух курорта кайса килсен) иртсе кайнă пек туйăнать, çын хăйне сывалнă шутлать. Анчах кĕтмен çĕртен (тепĕр чух апат тирĕнĕ çинчех) çĕнĕрен ыратма пуçлать. Çакăн пек хушăсем вĕсем уйăхĕпе, сайра-хутра çулталăкĕпе пулма пултараççĕ.

Язвăпа чирлĕ çынсем, вăхăтра сывалмасан, пурăна-киле, йĕркеллĕ апат çиейменнипе, пурнĕрех пĕтсе каяççĕ. Унсăр пуçне, вĕсем урăх хăрушлăхсем умĕнче те тăраççĕ. Язва мăн хырăма шăтарса тухса çурăлни те пулнă. Кун пек чух çын хăйне хырăмран çĕçĕпе чикнĕ пек кайса ÿкет. Ыратни тÿсме çук вăйлă, вăл тапкаланать, кăшкăрать, пулăшу пама тархаслать. Çак вăхăтра çынна вилĕм сехет шучĕпе кĕтет, мĕншĕн тесен хырăмра шалта шыçăнма пуçлать (перитонит пулать). Кунта ăна операци кăна çăлма пултарать, анчах чылай вăхăт иртсен (çур талăкран ытла, тепĕр чух унтан та сахалрах) вăл та пулăшаймасть. Тепĕр хăрушлăх — çăвартан е тула тухмалли вырăнтан юн кайни, пысăкрах юн тымарĕ татăлсан, çынна кĕске срокрах вăйран яма, нимĕнпе пулăшмасан, вĕлерсе пăрахма пултарать. Кун пек чух час-часах ăна юн яма лекет. Виççĕмĕшĕ — язва (пуринчен ытла пĕчĕк кукăрлчăк çинчи язва) сайра-хутра рака куçать. Çак хăрушлăхсенчен сыхланас тесен, язвăпа чирлĕ çыннăн хăйне хăй пит астуса пурăнмалла. Анчах чылай чух апла туни те пулăшмасть.

Язва чирне рентген çуттипе пăхса кураççĕ. Язва вырăнĕнче лакăм пулать, вăл вырăна барий пăтти парса тупаççĕ. Анчах язва чылая кайса тăртанса е урăхла улшăннă пулсай ăна курма çук. Çапах та, вăл улшăнусене рентген витĕр пăхса язва чирне аякран та пулин уйăрса илме май пур.

Язва чирĕнчен сыхланас тесен малта каланă сăлтавсене астумалла. Чир пуçланнине сиссен ăш чирĕсене сывататакан врачсем патне кайса кăтартмалла. Вĕсем каланă тăрăх, нимрен ытла апат-çимĕç тиркесе пымалла. Пуçланнă язва тепĕр чухне эмельсемпе тата апат-çимĕçе йĕркеленипех иртсе кайма пултарать. Çур çултан е çулталăкран та иртсе каймасан вара ахаль сывалассси çине шанма питĕ хĕн. Кун пек чух операци çинчен шутлама лекет. Язва операцийĕ çăмăл мар пулсан та, унран хăраса тăма кирлĕ мар. Язва операцине тунă хыççăн чиперех ĕçе юрăхлă çын пулма пысăк шанчăках пур.

К. П.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Германи çарĕн верховнăй командованийĕ çапла пĕлтерет: Германин пĕр подводнăй лодки противникăн сутуилӳ тумалли суднисене путарнă. Путарнă суднăсен пĕтĕм водоизмещенийĕ — 20 пин тонна.

Енер пирĕн авиаци Лондонри çар объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Çавăн пекех аэродромсемпе зенитнăй артиллери позицийĕсем çине, автомобильсен колоннисем, промышленноçлă сооруженисем тата чугунçул линийĕсем çине пыра-пыра тапăннă. Аэродромсенче ларакан бомбардировщиксем çине пăрахнă бомбăсем тĕлех пырса ӳкнĕ. Лондонран çурçĕр-хĕвелтухăç енчи вĕренӳ плацĕ çине пăрахнă бомбăсем боеприпассен складне çĕмĕрсе тăкнă. Кембриджран хĕвелтухăç енче тата Ноттингем патĕнче завод çурчĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

Донегол заливĕнчен хĕвелтухăç еннелле 400 километрта пирĕн бомбардировщиксем Англин суту-илӳ тумалли 3.677 тоннăллă суднине путарнă. Германин инçете перекен орудийĕсем Англин хĕвелтухăç пайĕнчи çар ĕçĕшĕн кирлĕ объектсем çине персе тăнă.

Германи çине, çавăн пекех Германи оккупациленĕ территори çине те противник самолечĕсем вĕçсе пыман. Германи истребителĕсем Дуврпа Лондон тĕлĕнче сывлăшри заграждении 12 аэростатне персе антарнă.

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Англире çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Германи самолечĕсем Центральнăй Англин хĕвелтухăç пайĕнчи пĕр хула çине чылаях бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсем хăшпĕр çуртсене кăштах сиен кӳнĕ. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисен хисепĕ пысăк мар. Ыран январĕн 31-мĕш тенĕ чух çĕрле нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи бомбардировщикĕсем Дувр тĕлĕнче сывлăшри заграждени аэростачĕсене атакăланă. Çанталăк пĕлĕтлĕ тата тĕтреллĕ пулни зенитнăй артиллерине пеме чăрмантарнă. Сывлăшри загражденин темиçе аэростатне персе антарнă.

—≈≈≈≈≈≈≈—

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Официальнăй ĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер вырăнĕ-вырăнĕпе пулнă операцисенче грексем хăшпĕр çĕнĕ пункт сене йышăннă тата 20 çынна яхăн тыткăна илнĕ, вăл шутра 7 офицер.

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, юлашки талăксем хушшинче грексем фронтăн пĕр секторĕнче ăнăçлă атака туса, итальянецсене вĕсем тăракан позицисенчен хĕссе кăларнă. Итальянецсен пысăк çухатусем пулнă. Çак операци Греци войскисене итальянецсен аллинче тăракан питех те кирлĕ база патне çити кайма пулăшнă.

Çурçĕрти фронтра наступление пытти чухнехинчен анлăрах пуçланă. Çав секторти атакăсем те Греци войскисене чылаях усă кӳнĕ.

Грексем пуринчен ытларах фронтăн центральнăй секторĕнче пысăк çитĕнӳсем тунă, унта вĕсем укреплени туса çирĕплетнĕ высотасене йышăннă. Çав высотасемпĕн çапăçусем икĕ эрнене яхăн пынă. Çынсене тыткăна илнĕ тата вăрçă хатĕрĕсене нумай туртса илнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсем Тепелене хулинчен эвакуаци тăваççĕ, вĕсем Валона патнелле чакаççĕ. Клисурăран çурçĕр енче грексем итальянецсен оборонин пĕрремĕш линине туртса илнĕ.

Греци правительстви представителĕ: фронтăн центральнăй секторĕнче грексем ĕнер итальянецсен вăйлă атакисене сирсе янă, противника хыттăн çĕмĕрнĕ, тесе пĕлтернĕ.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Греци фронтĕнче Итали авиацийĕн соединенийĕсем кĕперсемпе çулсем çине, противник войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

Киренаикăра, хамăран позицисене противник хупăрласа илесрен сыхланса, пирĕн войскăсем Дернăран тухса кайнă. Войскăсем хула патĕнчен хĕвеланăçпе кăнтăр еннелле чакнă, унта Австралин механизированнăй войскисем пуçланă атакăна сирсе янă.

Хĕвелтухăç Африкăри çурçĕр фронтĕнче пулса иртнĕ темиçе çапăçу вăхăтĕнче Итали войскисем противник атакисене сирсе янă, противнике пысăк çухатусем кӳнĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, Киренаикăра, Англин виçĕ самолетне персе антарнă, тăваттăмĕш самолечĕ ирĕксĕрех пирĕн аэродром çине анса ларнă.

Германи авиацийĕ Суэцпа Исмали çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă.

Дернăна илни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, англичансем Дернăна ик-виçĕ кун хушши пынă пысăк мар операцисем хыççăнах илнĕ. Англи войскисем хула патне сывхарса çитсенех, итальянецсем Барке еннелле эвакуаци тума пуçланă.

Малтан Англипе Австрали войскисем малти постсене йышăннă, ун хыççăн итальянецсен гарнизонĕ хирĕç тăнине путарса лартнă. Вăл гарнизонра вунă пин çын пулнă, тесе шутлаççĕ. Гарнизонри салтаксенчен пысăк пайĕ англичансем хупăрласа илнинчен татса тухнă пулмалла. Дернăри позицисем укреплени тĕлĕшĕнчен Бардипе Тобруккринчен начартарах пулнă пулсан та, итальянецсем англичансене çапах вăйлăн хирĕç тăнă.

Дернăпа Бенгази хушшинче опорнăй пунктсем темĕн чухлех, итальянецсем вĕсемпе англичансене хирĕç тăрас çĕрте усă курма пултараççĕ. Çавăнпа та англичансем Ливи фронтĕнче малалла кайса пырасси чылаях чакĕ, тесе шутлаççĕ.

Румынири событисем

БУХАРЕСТ, январĕн 30-мĕш. (ТАСС). Правительство темиçе хут асăрхаттарнă пулсан та, легионерсем хĕçпăшал таврашне влаçсене памаççĕ, ухтарусем тунă вăхăтра уйрăм çынсем патĕнче нумай хĕçпăшалсем тупаççĕ. Çакна пула Румыни правительстви Бухаресра тепĕр хут ухтару туса тухма распоряжени панă. Çар çынни-сен ушкăнĕсем хваттерсем тăрăх çӳреççĕ. Легионерсем патĕнче пытарса хунă хĕçпăшалсене тупаççĕ, тесе пĕлтереççĕ. Çакна май нумай çынсене арестлеççĕ. Хулара пур çĕрте те трамвайсемпе автобуссем çинче, такси çинче ухтарусем тăваççĕ. Пуринне те документченĕсене тĕрĕслеççĕ. Хаçатсем ухтарусен результачĕсем çинчен, шыраса тупнă хĕçпăшал склачĕсемпе пурлăхсем çинчен пĕлтереççĕ.

БУХАРЕСТ, январĕн 30-мĕш. (ТАСС). «Акциунеа» хаçат çапла çырать: январĕн 29-мĕшĕнчен Бухарест хулинче 1965 çынна арестленĕ, вĕсем хушшинче 52 хĕрарăм. Январĕн 29-мĕшĕнче çĕршывра пурĕ 269 çынна, Бухареста 57 çынна арестленĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк пост» хаçат çапла пĕлтерет: çиелтен шутласа тухнă тăрăх та, Румынире железногвардеецсемпе пулса иртнĕ тытăçусенче 9—12 пин çынна вĕлернĕ, вăл шутран 4 пин çын ытла Бухареста. Бухареста вĕлернисен шутĕнче пăлхавçă-железногвардеецсем 2 пин çынна яхăн, салтаксем 600 çынна яхăн тата граждăнла халăх хушшинчен 1.400 çын, вĕсенчен сахалтан та 1.000 еврей.

БУХАРЕСТ, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем çĕршывра туса ирттерекен ухтарусен результачĕсем çинчен пĕлтерсе пыраççĕ.

«Тимпул» хаçатра пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калана тăрăх, Яссы хулинче легионерсем полицин вырăнти отрячĕн складне çĕмĕрсе кĕнĕ, унти хĕçпăшалсене илсе тухнă.

Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, халиччен çакăн чухлĕ хĕçпăшала конфискациленĕ: 87 пулемет, алла тытса пемелли 461 пулемет, 18.812 винтовка, ухута пăшалĕсем 7.330 пăшал, 337.490 патрон, 417 граната, 105 динамит шашкисем т. ыт. те. Журналистсем хушшинче: чăннипе илсен çак цифрăсем нумай пысăкрах, тесе шутлаççĕ.

БЕЛГРАД, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). «Политика» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бухареста 2.022 çынна арестлени çинчен пĕлтернĕ. Халĕ те нумай çынсене арестлеççĕ.

—≈≈≈≈≈≈≈—

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра иртнĕ эрнере пуринчен ытларах Синьян секторĕнче (Хэнань провинцинче) вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ, унта японецсем çурçĕр еннелле, Бэйпин—Ханькоу чугунçулĕ тăрăх наступлени пуçланă. Синьян районĕнче, Китайран илнĕ сведенисем тăрăх, Японин икĕ дивизие яхăн шутланать. Январĕн 26-мĕшпе 28-мĕш хушшинче японецсем, вăйлăн çапăçса, çурçĕр тата çурçĕр-хĕвеланăç еннелле 50 километр кайнă.

Ланян районĕнче те (Хубэй провинцийĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕ) çапăçусем пулса иртнĕ. Японецсем Юньнаньрен хĕвелтухăç енчи района пырса çитнĕ пулнă, анчах Китай войскисем вĕсене каялла хăваласа янă.

Кăнтăр тата Çурçĕр Китайри фронтсенчи ĕçсем çинчен сведенисем çук.

* * *

Январĕн 29-мĕшĕнче Япони самолечĕсем Куньмин (Юньнань провинцийĕ) хулинчи учрежденисем йышлăн вырнаçнă çĕре бомбăсем пăрахнă. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем 40 çын шутланаççĕ.

Январĕн 30-мĕш. (ТАСС).

Центральнăй Китайра Япони войскисен 7 пин çынлă отрячĕ Бэйпин—Ханькоу чугунçулĕ тăрăх çурçĕр еннелле наступлени туса пырать. Январĕн 28-мĕшĕнче Циошань станци çывăхĕнче (Синьянран 70 километрта) хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Японирен пĕлтернĕ тăрăх, ыран январĕн 30-мĕш тенĕ чух çĕрле çак районра японецсем 3 пункта туртса илнĕ.

Çурçĕр Китайпа Кăнтăр Китайри фронтсенчи лару-тăру çинчен сведенисем çук.

* * *

Темиçе кун каярах Суйюань провинцийĕн хĕвеланăç пайĕнче пуканелле влаçсен войскисем восстани пуçланă, кайран Китай войскисем енне куçнă.

Январĕн 31-мĕш. (ТАСС).

Шупашкарти динамовецсем йĕлтĕрлĕ тренировкăра.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Республикăн пур кĕтессисенчен те

300 çын Шупашкара йĕлтĕрпе çитеççĕ

СĔНТĔР, февралĕн 1-мĕш. (Телефонпа). Слет делегачĕсем команди çул çине тухиччен малтан тренировкăсенче пулчĕ. Çамрăк стахановецсем йĕлтĕрпе çӳреме аванах хăнăхса çитрĕç. Паян, ирхине 10 сехетре, команда Шупашкара тухса кайрĕ. Кĕçĕр вăл Хыркассине çитет.

Делегатсен йышĕнче — районра малта пыракан колхоз çамрăкĕсем. Сăмахран, «Родина» колхоз бригадирĕ И. Емельянов иртнĕ çулта хăйĕн бригадинче вăтам шутпа гектартан 19 центнер тĕштырă туса илнĕ. Кăçал та вăл çуракине лайăх хатĕрленет.

Командăра виçĕ хĕрача. Вĕсем—ферма заведующийĕ, доярка тата зоотехник.

СĔНТĔРВĂРРИ, февралĕн 1-мĕш. (Телефонпа). Паян шăп 12 сехетре команда çула тухрĕ. Йĕлтĕрçĕ-колхозниксен хисепĕнче 5 хĕрача. Вĕсем Шупашкара пысăк хаваспа тухса кайрĕç. Çанталăк сивви те вĕсене хăратмасть.

Çула тухас умĕн врач калаçу иртерчĕ. Вăл çамрăк йĕлтĕрçĕсене паха канашсем пачĕ.

Команда кĕçĕр Паникассине çитсе выртать. Унта колхозниксемпе тĕл пулса калаçаççĕ, колхоз çуракине мĕнле хатĕрленсе пынипе паллашаççĕ.

ОКТЯБРЬСКОЕ, февралĕн 1-мĕш. (Телефонпа). Слет делегачĕсем пурте колхозсенчи çамрăк стахановецсем. Слета хатĕрленнĕ тата тренировкăсем иртернĕ май пĕр-пĕрин ĕçĕпе паллашнă. Делегатсенчен чылайĕшĕ 350—400 ĕçкунĕ тунă.

Маршрут тăрăх команда кĕçĕр Шемшерте çĕр выртмалла.

АСЛĂ ТУКАЛЬ (Çĕрпӳ р.) Тăвай районĕн команди январĕн 31-мĕшĕнче Аслă Тукаль ялне çитнĕ. Команда çуракине хатĕрленес ыйтупа колхоз активне пухса калаçнă.

Йĕлтĕрçĕсем çитнĕ ятпа каçхине колхоз çамрăкĕсем вечер туса ирттернĕ.

* * *

Республикăри штаба пĕлтернĕ тăрăх, Шупашкар тата Ишлей районĕсемсĕр тусене, ытти районсенчи командăсем пурте çул çинче.

—⊙—

Актерсем валли лекцисем

Чăвашсен Государство Академи Театрĕнче виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ творчество ĕçĕнчи работниксем валли организациленĕ лекторий ĕçлет. Актерсем, музыкантсем т. ыт. те кашни эрнерех пĕр кун пухăнса тĕрлĕ темăсем тăрăх лекцисем итлеççĕ.

Виçĕ уйăх хушшинче 15 лекци ытла итленĕ, вăл шутра парти историйĕ, философи, литература, искусство, пĕтĕм тĕнчери лару-тăру, чăваш халăхĕн историйĕ ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем пулнă.

«ВКП(б) историйĕ мĕне вĕрентет» темăпа ВКП(б) Шупашкар горкомĕн секретарĕ Романова, чăвашсен XVIII ĕмĕрти пурнăçĕ çинчен Хусанти университетăн профессорĕ Никольский юлташсем калаçусем ирттернĕ

Драмкружоксене пулăшаççĕ

Чăвашсен Государство Академи Театрĕнчи артистсем ĕçсыннисен художествăллă пултарулăхне сарса пыма пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем вырăнсенчи драмкружоксене практикăллă кăтартусем параççĕ. Ку тĕлĕшпе Мартягин, Аленцев, Жирнова, Тихонова, Кронберг, Дуняк, Козлов, Спранце юлташсем уйрăмах пысăк ĕçсем тăваççĕ.

Спранце артист ертсе пынипе типографи çумĕнчи драмкружок 2 спектакль хатĕрлесе лартса пачĕ. Нумаях пулмасть çак кружок «Бабушка» комедие пысăк çитĕнӳпе выляса панă. Типографи рабочийĕсем Спранце артиста тав турĕç.

Чăвашсен Государство Академи Театрĕ çак кунсенче вырăнсенчи драмкружоксене пулăшма ятарласа артистсен группине уйăрма палăртнă. Çак группа халăх пултарулăхĕн Çурчĕ кăтартнă тăрăх драмкружоксене практикăллă пулăшу пама районсене тухса каймалла.

Паян комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать

Кăçалхи хĕл физкультура движенин историйĕнче йĕлтĕр спорчĕ нихăçан-хинчен те вăйлăн сарăлса кайнипе палăрать пулса юлать. Профсоюзсен кросĕ, комсомолецсен Карело-Финн республикинчи комсомол организацийĕ пуçарнипе пулса иртнĕ заочнăй йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ пĕтĕм халăх кросĕ (ăмăртăвĕ) пулса тăчĕç. Вăл ăмăртусене ваттисем те, çамрăксем те йышлăн хутшăнчĕç.

Йĕлтĕр спорчĕ çавăн пек анлăн сарăлса кайни спортăн çак енĕсем, уйрăмах йĕлтĕр спорчĕ çине партипе правительство тимлĕн пăхни çинчен, ĕççыннисен сарлака масси йĕлтĕр спорчĕн пĕлтерĕшне тĕплĕн тата тĕрĕс ăнланса илни çинчен калать. Халь ĕнтĕ сывлăха çирĕплетес çĕрте, вăрçă вăхăтĕнче йĕлтĕр спорчĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине пирĕнтен кашниех ăнланса илме пултарать. Çавăнпа та ĕнтĕ кăçал пулса иртекен массăллă кроссене халиччен йĕлтĕр çине тăрса курман çынсем хутшăннинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Физкультурăпа спорт ĕçне çĕнĕрен пиншер çын хутшăнчĕç. Вĕсем кроссене хутшăничен малтан тренировкăсенче пулса вуншар, çĕршер километр йĕлтĕрпе çӳресе хăнăхаççĕ. Çак ĕçсене вĕсем пĕтĕмпех ГТО комплексĕн хĕллехи нормисене парассине тĕп никĕсе хурса туса пыраççĕ.

Комсомолецсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кросне хутшăнма хатĕрленнĕ май пирĕн республикăра пиншер çын тренировкăсенче пулчĕç, вуншар походсем туса ирттерчĕç.

«Большевик» спорт обществин членĕсем Канаш—Шупашкар маршрутпа 93 километрлă, Сĕнтĕр районĕнчи çамрăксем 35 километрлă, Иккассинчи (Шупашкар р.) комсомолецсем 40 километрлă походсене кайса килнĕ, пилĕкшер, вуншар километрлă походсем ирттернисем республикăра вуншарăн шутланаççĕ. Çаксем вĕсем пурте çамрăксен сарлака массине йĕлтĕрпе çӳреме хăнăхтарас енĕпе туса ирттернĕ паха ĕçсем пулса тăраççĕ.

«Восход» тата «Строитель» спорт обществисем комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросне уйрăмах лайăх хатĕрленчĕç.

Вĕсем ку ĕçре вырăнти физкультура коллективĕсене пысăк пулăшу пачĕç. «Восход» спорт обществи промартельсенчи физкультура коллективĕсене пулăшма чи лайăх йĕлтĕрçĕсенчен бригада туса ăна районсене кăларса ячĕ.

Паян комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать. Ку кроса пуринчен ытларах çамрăксем хутшăнаççĕ. Комсомолецсен кросĕ уйрăмах пысăк ăнăçлăхпа иртмелле. Мĕншĕн тесен кроса хутшăнакансен йышĕ пысăк тата вĕсем çамрăксем. Кроса хутшăнма 4000 команда яхăн тунă. Вăл командăсенчен чылайăшĕ нумай вăхăт хушши тренировкăсенче пулчĕç.

Çавăнпа та ĕнтĕ комсомолецсен кросĕ кăтартуллă иртмелле. Старта тухакан кашни комсомолец ГТО комплексĕн нормине панипе лăпланмалла мар, уйăн чи паха результатсем кăтартмалла. Çакна тăвас тесен, хăйĕн вăйĕпе дистанцире тĕрĕс усă курма, вăхăта тĕрĕс шута илсе чупма пĕлмелле. Пуринчен ытла йĕлтĕре тыткалама тата унпа сӳреме пĕлни кирлĕ.

Спорт обществисен кроса тĕрĕс тата тĕплĕн организацилемелле. Кăçал физкультура енĕпе пулса иртнĕ ăмăртусенче судьясен составĕ хăйĕн ĕçне кирлĕ пек йĕркелеменни палăрчĕ. Пурне те малтан хатĕрлесе хумалла, дистанцисене тĕрĕс виçмелле, унта кирлĕ çынсене вăхăтра тăратса тухмалла, заявкăсене те вăхăтра илсе йĕркелемелле т. ыт. те.

Кросс участникĕсене медицина енĕпе тĕрĕслесси те пĕчĕк ыйту мар. Халиччен ку ыйту çине пачах çителĕксĕр çаврăнса пăхнă. Хăшпĕр физкультура коллективĕсем çынсене медицина енĕпе тĕрĕслемесĕрех старта илсе тухнисем пулнă. Çаксене пĕтĕмпех шута илмелле. Кросăн малтанхи кунĕсенче палăртнă йăнăшсене çийĕнчех пĕтерсе пымалла.

Йĕлтĕрçĕсен массăллă кросĕсем оборона тĕлĕшĕпе пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Кроссене лайăх ирттерни Хĕрлĕ Çар ретне пултаруллă çамрăксене хатĕрлесе пама, физкультурниксен йышне ӳстерме, физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатма пулăшать.

Комсомолецсем, пурте старта тухăр!

Йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвĕ

«Восход» спорт обществин Чăваш Совечĕ 1941 çулти февралĕн 8-мĕшпе 9-мĕш кунĕсенче, Шупашкар хулинче Леспромкооперацин артелĕсем çумĕнчи физкультура коллективĕсен республикăри ăмăртăвне туса ирттерет.

Ăмăрту программине çаксем кĕреççĕ: арçынсем 10 километрлă военизированнăй похода каймалла тата йĕлтĕрпе 20 километр хушши чупмалла. Хĕрарăмсем 3 километрлă военизированнăй похода каяççĕ тата йĕлтĕрпе 5 километр хушши чупаççĕ.

Йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвĕнче вырăнсенчи коллективсенчи чаплă йĕлтĕрçĕсем пулаççĕ. Çакна май ăмăрту участникĕсем тата унта курма пыракансем чаплă йĕлтĕрçĕсен опычĕсемпе паллашма пултараççĕ.

Пĕрремĕш вырăна тухакан физкультура коллективĕсене «Восход» спорт обществин Чăваш Совечĕ грамотăсем парса наградăлать.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕн старчĕпе финишĕ те Чăвашдревпромсоюз çурчĕ умĕнче пулать. Ăмăрту кăнтăрла 12 сехетре пуçланмалла.

В. Грехов.

—≈≈≈≈≈≈≈—

Красноармеец çырăвĕ

Ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешетпĕр

Пирĕн №-лĕ часри курсантсем Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрçĕсен ăмăртуне активлăн хутшăнчĕç. Малтанхи вăхăтра йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентĕмĕр. Унтан тренировкăсем тата походсем ирттерме тытăнчĕç. Пирвайхи хут 16 километрлă похода кайса килтĕмĕр. Çакăн хыççăн палăрнă çитменлĕхсене тĕплĕн тишкерсе тухрĕç.

Лейтенант Федорчук юлташ походра мĕнле пулмалли çинчен, йĕлтĕрпе çӳресси çинчен каларĕ. Вăл пирвайхи походра тунă çитменлĕхсене пĕтерме хушрĕ.

Иккĕмĕш хут 25 километрлă похода кайса килтĕмĕр. Ун чухне çанталăкĕ те начар пулчĕ. Çавăн пекех чăрмавсем нумай тĕл пулакан вырăнсемпе кайма тиврĕ. Çак йывăрлăхсене пăхмасăр, походa ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр.

Эпир кун пек походсене час-часах ирттеретпĕр. Тренировкăсенче те ялнах пулатпăр. Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче малти вырăна тухассишĕн кĕрешетпĕр.

Курсант **Н. Ильичкин.**

Балтика таврашĕнчи Уйрăм Çар Округĕ.

Театр ĕçĕ лайăхланса пырать

Сĕнтĕрвăрринчи колхоз театрĕ иртнĕ çулсенче çителĕксĕр ĕçлесе пынă. Ăна иртнĕ çулта репертуар планне пурнăçа кĕртменни те уçăнах кăтартса парать. Театр 6 пьеса хатĕрлесе лартса парас вырăнне 2 пьеса çеç лартнă. Вĕсене лартма та художество енчен çителĕксĕр хатĕрленнĕ пулнă. Çакна май финанс планне тултарайман.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче театр ĕçне йĕркелеме кирлĕ кăтартусем пачĕ. Халь колхоз театрĕ ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕ.

Кăçалхи çул театр 8 пьеса лартса пама палăртнă. Çак шутран «Сады цветут» пьесăна лартма хатĕрленсе çитнĕ те ĕнтĕ. Çитес кунсенче театр Сĕнтĕрвăрри тата Шупашкар районĕсене тухса каять.

Театр артистсем хушшинче ĕçлессине те аванлатса пырать. Репетицисемсĕр пуçне, творчество ыйтăвĕсемпе занятисем ирттереççĕ. Артистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне те ӳстерсе пыраççĕ. Вĕсем парти историне вĕренме тытăннă.

Драмкружоксене пулăшса пырас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тума палăртнă. Постановкăсем лартма каяс умĕн кашни артистах уйрăм кăтартусем памалла. Вĕсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ кружоксене практикăллă кăтартусем параççĕ.

Театр хуçалăх енчен те çирĕпленсе пырать. Кăçалхи çул 220 постановка пама палăртнă. Вĕсене курма 50 пин çынна явăçтармалла. Çак ĕçе пурнăçласан театр укçа-тенкĕ енчен вăйланçах пымалла.

Н. Амурцев.

Нумай ачаллă амăшсене 1.200 миллион тенкĕ панă

ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариатĕнче нумай ачаллă амăшсене 1940 çулшăн пособи панин малтанхи итогĕсене тунă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, 1.225.483 пин тенкĕ — 1939 çултинчен 120 миллион тенкĕ нумайрах, 1938 çултинчен 300 миллион тенкĕ нумайрах тӳленĕ.

Иртнĕ çулта Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенчи нумай ачаллă çемьесене пысăк сумма тӳленĕ. Дрогобыч облаçĕнче, сăмахран, 2,5 миллион тенкĕ ытла тӳленĕ, Станислав облаçĕнче, — 2,6 миллион тенкĕ. Львов облаçĕнче — 2,1 миллион тенкĕ т. ыт. те.

Халăха вĕрентес ĕç работникĕсен Пĕтĕм Российăри канашлăвĕ хупăннă

Январĕн 31-мĕшĕнче автономлă республикăсенчи Çутĕç Халăх Комиссарĕсен, халăха вĕрентес ĕçĕн крайсемпе облаçсенчи отделĕсен заведующийĕсен Пĕтĕм Российăри канашлăвĕнче шкулсен институчĕн директорĕ профессор Всесвятский юлашки сăмах калана хыççăн, РСФСР Наркомпросĕн пуçламĕшпе вăтам шкулсен Управленийĕн начальникĕ Парфенова юлташ тунă доклад тăрăх резолюци йышăннă.

Унтан РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Гаврилов юлташ тухса калана, вăл республикăра хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç мĕнле пыни çинчен каласа панă. Сталинла икĕ пятилетка хушшинче кăна 40 миллион çынна вĕрентнĕ. Анчах та çĕршывра хутла пĕлменнисем 6 миллион çын ытла шутланаççĕ-ха, вĕсене вĕрентес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттермелле. Ку тĕлĕшпе малта пыракан чи лайăх учительсем активлă ĕçлеççĕ.

Тутар АССР Республикинче общественник-культармеецсем хушшинче 7 пин учитель шутланать, Чкалов облаçĕнче — 2 пин учитель т. ыт. те. Хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе шкул ачисем те нумай ĕçлеççĕ. Анчах çак кирлĕ те хисеплĕ ĕçе учительсене тата вĕренекенсене татах та нумайрах явăçтарас пулать.

Халăха вĕрентес ĕçĕн Смоленск облаçĕнчи отделĕн заведующийĕ Наумкин юлташ хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç опычĕ çинчен каласа панă. РСФСР Наркомпросĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавĕ — Смоленск облаçĕнчи отдел аллинче. Крым АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Гавриленко юлташ Крымра хутпĕлменлĕх пĕтсе пыни çинчен пĕлтернĕ.

Канашлу участникĕсене медицина, фармацевтика тата стоматологи институчĕсен директорĕсен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕн делегацийĕ пырса саламланă.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ В. П. Потемкин юлташ юлашки сăмах калана хыççăн, канашлу хăйĕн ĕçне туса пĕтернĕ. (ТАСС).

Çамрăк учительсен канашлăвĕ

СĔРПУ. Педучилищере çамрăк учительсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта 1939—40 çулсенче çак училищерен вĕренсе тухнисем—халь учитель пулса ĕçлекенсем, училищери преподавательсемпе III-мĕш класра вĕренекенсем тата хулари шкулсенче ĕçлекен учительсем пулчĕç.

Канашлура училищери вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Лаптев юлташ «Макаренкон педагогика наследствийĕсем çинчен» темăпа паха доклад туса панă. Учитель Т. Иванов хăйĕн ĕç опычĕсемпе паллаштарчĕ.

Училищере канашлăва пыракансем валли педагогикăпа методика ыйтăвĕсем тăрăх выставка организациленĕ. Çамрăк учительсене выставка кăмăла кайрĕ. Вĕсем унта примернăй плансемпе, конспектсемпе тата ытти пособисемпе паллашрĕç.

Канашлу хыççăн вечер пулчĕ. Педучилищере вĕренекенсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

П. Петров.

—⊙—

Вилĕмрен çăлнă

СĔНТĔРВĂРРИ. Çак кунсенче больницăна вилес патнех çитнĕ Выговорова юлташа илсе пынă. Кунта хирург пулса ĕçлекен И. Алексеев ăна çийĕнчех пулăшу панă. Анчах пирвайхи пулăшу панипе кăна чирлĕ çынна сыватма йывăр пулнă. Больницăра ĕçлекенсенчен пĕри чирлĕ çынна сыватма хăйĕн юнне пама килĕшнĕ. Çакăн хыççăн Выговорова юлташа çийĕнчех юн хушса панă. Вăл çакăн пек тунипе вилĕмрен çăлăнса юлнă.

Хирург Алексеев юлташ çакăн пек нумай çынсене вилĕмрен çăлнă. Ăна колхозниксем тав тăваççĕ, унăн паха ĕçĕсене ырлаççĕ.

П. ВАНЮШИН.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

ЧЕБОКСАРСКОМУ
ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ
ТРЕБУЮТСЯ
ПЛОТНИКИ
на постройку коровника и свинарника. Оплата сдельная. Предоставляется общежитие.
Дирекция.
3—2

ВНИМАНИЮ КНИГОТОРГУЮЩЕЙ СЕТИ КОГИЗА И ЧУВАШСОЮЗА

В складе Госиздата Чувашской АССР имеется в наличии выборная литература на чувашском языке:

1. Положение о выборах в Верховный Совет ЧАССР . . Цена 15 коп.
2. Положение о выборах в Верховный Совет РСФСР . . „ 15 „
3. **Вышинский**—Положение о выборах в Верховный Совет СССР (в вопросах и ответах), ... „ 30 „
4. Конституция (Основной Закон) Чувашской АССР . . . „ 20 „
5. Конституция (Основной Закон) Союза ССР . . . . . „ 25 „
6. **Сталин**—Доклад о проекте Конституции СССР . . . . „ 25 „
7. **Сталин**—Речь на предвыборном собрании избирателей Сталинского избирательного округа г. Москвы . . . . „ 10 „
8. **Молотов**—Об избирательном блоке коммунистов с беспартийными . . . . . „ 15 „
9. **Жданов**—Речь на собрании избирателей . . . . . „ 20 „

Госиздат Чуваш. АССР.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çы русемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» жур-налăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2210.

Гор. Чебоксары, типография № Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.